Евгений ТУРХАН

# *ХӐРУШӐ ЧИР*

*Евгений ТУРХАН*

# ХӐРУШӐ ЧИР

*ПОВЕСТЬ*



ХУСАН, 2000

ББК 84 Чув 6
Т86



# АВТОР ÇИНЧЕН

*Евгений Андреевич Турхан кăçал 5О çул тултарчĕ. Пичет ĕçĕнче 25 çула яхăн вăй хурать. Малтанхи калавĕ 1973, сăвви 1976 çулта кун çути курнă.1981 çултанпа СССР журналистсен Союзĕн членĕ. Митта Ваçлейĕн премийĕн лауреачĕ. Сăввисемпе калавĕсем тĕрлĕ хаçатсенче, «Ялав», «Капкăн» журналсенче тăтăшах пичетленнĕ. «Пионер сасси» хаçатра «Палăк вăрттăнлăхĕ» повеçĕ, «Сувар» хаçатра «Чĕрĕлĕх шывĕ» романĕ кун çути курнă. Пĕлтĕр Хусанта «Тайна обелиска» кĕнеки вырăсла пичетленсе тухнă.*

ISBN 5-89928-026-3



## *Пĕрремĕш сыпăк. ЧЕКАЛИН КОМИССАР*

Автобус çул урлах мĕлкине ӳкернĕ лапсăркка йывăç тĕлне çитсен тăпах чарăнчĕ. Йывăçĕ ахăртнех кăнтăр енчи: кунашкаллисем Андрейсен тăрăхĕнче, Чăвашра, çук.

— Çитрĕмĕр. Санăн тухмалла, — терĕ тарланă питкуçне юр пек шурă алтутрипе шăлса типĕтнĕ май вăтам çулсенчи тулли шофер. Шăрăхра япăх туять пулас хăйне.

— Ак çак сукмакпа тӳрех, ниçталла пăрăнмасăр ут. Каланчана кунтан сакăр çухрăмсем патне. Чипер çит!

— Тавах, пичче. Çулăр такăр пултăр, — йывăр чăматанне илсе арçын ача тĕрлĕ курăк-чечек, эрĕм шăрши кĕрекен тусанлă çĕр çине анса юлчĕ. Тапранса кайнă автобуса ал сулса ăсатнă хыççăн васкамасăр шоссе çумĕнчи урапа çулĕ çине тухрĕ.

Хĕвел ăшшине ниçта чикме аптăранă-ши: хĕртет, хĕртет... Шурă панама витĕр те пуçа вĕри çапать.

Хĕвелтен анраса ларакан имшеркке ӳсентăрансем сарă тусанпа витĕннĕ. Андрей утнă çĕртех курăк тунине татса çăварне хыпрĕ. Çăтăрт-çăтăрт турĕç шăл хушшине лекнĕ хăйăр пĕрчисем.

Çёлен пек авкаланса выртать çул. Пĕрре сăрталла хăпарать, тепре анаталла ӳкет. Шоссе паçăрах куçран çухалчĕ. Малта, куçа ывăнтаракан инçетре, тусем палăраççĕ. Мăнаккăш çырнă тăрăх вĕсем чикĕ леш енчех. Ку енче уйрăм ларакан çӳллĕ чул хысакĕ пулма кирлĕ. Халăх ăна Каланча тет имĕш. Ялне те, хысакпа юнашартантăр, çаплах ят панă. Ашшĕн аслă аппăшĕ, Андрей мăнаккăшĕ, шăпах унта пурăнать. Вунă çул каялла пограничник-офицера качча тухнăскер, упăшкипе кунта çакланнă. Инкек куçа курăнса килмест. Чикке пăсакансене тытса чарнă чухне упăшки вилет. Пĕччен хĕрарăм Каланчара уйрăм çурт туяннă та çакăнтах юлнă. Виçĕ çул ĕнтĕ шăллĕн ачине хăнана чĕнет. Тăван аппăшне кайса курма та вăхăт тупаймасть мар-и Андрей ашшĕ.

Кăçал отпуск илсен каятпăрах текелесе тăратчĕ. Кирлĕ япаласене те пуçтарнăччĕ — пулмарĕ. Колхоз председателĕ чирлесе ӳкрĕ. Ашшĕн, зоотехникра ĕçленĕскерĕн, хуçалăх тилхепине вăхăтлăха хăй аллине илме тиврĕ. Ывăлĕн кăмăлĕ юлнине асăрхасан: «Ларса вĕçтер-ха пĕчченех», — терĕ.

Унта вара амăшĕ шарт та март пулчĕ. Ним тусан та ярасшăн мар. Ашшĕ те парăнмарĕ.

— Вунтăваттăра вăл. Ун çулĕнче эпĕ суха тунă, шартлама сивĕре вăрман касса турттарнă, вăрçа вăрттăн тухса тарнă... Минска çитнĕ. Тытайман пулсан Берлина та...

— Ун чухне вăрçă кĕрленĕ, халь самани урăх, — тава кĕрет амăшĕ.

— Тĕрĕс. Эпир хăрушă вăхăтра çитĕннĕ, выçă ӳснĕ. Пĕчĕклех йывăр ĕçре хытнă. Хальхи çамрăксем вара? Ав кӳршĕсен пӳпперĕ çирĕмре. Ниçта та ĕçлемест. Пĕрех чаплă улпут пек тумланать. Автомашина илсе пачĕç тата. Ашшĕ-амăшĕ айван: хăйсемех ĕнсе çине лартрĕç.

— Вĕсен пĕр ывăл. Çавăнпа иртĕхтереççĕ те. Пирĕн - ултă ача! Пĕри тепринчен вакă. Илĕн кунта машина, — пӳлет амăшĕ.

— Хам миллионер пулсан та машина мар, мотоцикл

туянса парассăм çукчĕ. Çӳреччĕр велосипедпа. Сывлăхшăн та усăллă. Чаплă япаласене ӳссен хăйсем ĕçлесе илччĕр,— хĕрсех пырать ашшĕ те.

— Ара, ара. Ăçта унта санашкал. Ачасене мĕн шеллемелле, — витлешет амăшĕ. — Володян шăлаварĕ те якалса шăтать ĕнтĕ. Миçе каланă çĕнни илмелле тесе — çук вĕт. Валя та вунпиллĕкре. Тантăшĕсем ылтăн хăлха çаккисемпе ялкăштарса çӳреççĕ, хĕрĕмĕрĕн кĕмĕлли те çук.

— Юрĕ ĕнтĕ, çитĕ, — тавлашу вĕçне тухаймасса сиссетĕр, ашшĕ хĕрӳлĕхне кăштах чакарать. — Хăвах пĕлен: кĕлмĕçленсе, хытса пурăнмастпăр. Тата хамăршăн мар, вĕсемшĕнех тăрăшатпăр. Ĕç тĕлне, пус хакне пĕлсе ӳсчĕр тетпĕр-çке.

Сăмах пине çитнине туйса иккĕшĕ те шăпланаççĕ. Амăшĕ те парăнать.

Андрей ачалла хĕрӳлĕхпе тавлашакан ашшĕ-амăшне куç умне кăларать те чунĕнче ырă-ырă пулса каять. «Лайăх атте-анне ман».

Çемьере Андрей иккĕмĕш. Иртĕхсе ӳсмен. Çулла колхоз сыснисене кĕтнĕ. Çĕрулми-кăшман çумланă... Укçа çитменрен кăна мар. Ял хавалĕ çапла: пĕчĕклех куршанак çыпăçать хресчен ачине.

Хыçра мотор сасси илтĕнчĕ. Мĕн ку? Велосипед тес, велосипед мар: йăлтăр-ялтăр кустăрмасем, темĕнле рычагсем, сăнчăрсем. Тĕлĕнтермĕш конструкци Андрейпе танлашсан кĕтмен çĕртен чарăнчĕ. Хуçи унпа пĕр çулаллах. Çулăм пек хĕрлĕ, тăрмаланчăк çӳçлĕскер. Пичĕ пăчăр-пăчăр хуратутлă.

— Мĕн çул даррипе лапăстатса пыран? Иртсе кайма çук. Документсем пур-и? — çиллессĕн ыйтрĕ хайхи.

— Мĕнле документсем? Милиционер мар пулĕ те, — йĕкĕлтешрĕ Андрей.

Хĕрлĕ пуç шӳтлемест пулас.

— Милиционер теместĕп, анчах документсем тĕрĕслеме пултаратăп. Эп пограничниксен çамрăк тусĕ. Эсĕ

вара кам? Погранзонăра мĕн туса çӳрен?

— Ăçта вара кунта погранзона? Мана чикĕ Каланчаран вунпилĕк çухрăм лерелле тенĕччĕ.

— Вăл ниме те пĕлтермест. Чикке çити урăх пĕр ял та çук. Йĕри-тавра хăйăр. Çавăнпа ку вырăнсене погранзона теме те пулать. Шкулта ахаль мар ПСТ пур.

— Мĕ-ĕ-н?

— ПСТ: пограничниксен çамрăк тусĕсем. Пограничниксем — пирĕн шефсем. Хамăр та заставăра час-часах пулатпăр. Удостоверени те пачĕç. Ăт, Дима Макаров шпиона тытма пулăшнă. Сехет парнелерĕç ăна. Çиеле çырсах, — юлашки хыпарне, пысăк вăрттăнлăх тейĕн, пăшăлтатсах пĕлтерчĕ тĕрĕслевçĕ.

Мухтанарах калаçса вăй нумай пĕтерчĕ-ши, пичĕ те тарларĕ. Андрей чутах кулса яратчĕ.

— Каçар мана. Пĕлмен. Докуменчĕсем йĕркеллех-ха вĕсем. Пĕчĕк тесе çеç алла памаççĕ. Каланчара мăнакка пурăнать. Упăшки офицер пулнă. Виçĕ çул каялла вилнĕ. Çавăнта хăнана каятăп.

— Э-э, апла эс Даша аппа патне? Тӳрех калаççĕ ăна. Кӳршĕсем унпа. Ĕнер асăннăччĕ çав хăна килмелле тесе. Пĕлетне, эпир шефа илнĕ сан мăнаккуна. Ялан пулăшатпăр, — çерçи сăхса пĕтерейместе сирпĕнтерет сăмахĕсене аппăш кӳрши. — Атя, паллашар. Рахим. Хушаматăм — Хусейнов. Ачасем... (кунта вăл калас-ши, калас мар-ши тенĕн чарăнчĕ) механик тесе йĕкĕлтеççĕ. Техникăна пи-и-тĕ юрататăп. Рахим машина çăвĕпе вараланнă аллине тăсрĕ.

— Эпĕ Андрей Селиванов, Чăваш çĕршывĕнчен.

— Чăваш-и? Пĕлетĕп унашкал халăх пуррине. Йыш хушăнсах пырать. Эпир туссемпе «тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекенсен» отрядне йĕркелерĕмĕр. Саккăрăн унта. Тĕрлĕ халăх ачисем. Паллаштаратăп-ха акă. Кайрăмăр.

Андрей шикленерех велоходăн пĕр ларкăчĕ çине вырнаçрĕ.

— Ан хăра, ишĕлсе анмасть. Лайăх машина. Мотор

çĕмĕрĕлсен педальпе таптарма пулать. Моторĕ çĕнех-ха. Килте тепре те выртать. Колхозра ĕçлесе илнĕ укçапа туянтăм. Ку элесмелесе ăсталама тете те пулăшрĕ. Сварщик вăл.

Андрей ахалех хăранă иккен. Сăрă тусан çĕклентерсе аванах вĕçтерчĕç малалла. Сăртран иртсен тем çӳллĕш ашкăрса кайнă ӳсентăрансем хушшине пырса кĕчĕç. Инçетре хура чул хысакĕн тăрри курăнать. Тата леререх, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте, тусем, тусем...

Тепĕртакран машина чечеклĕ уçланка вĕçтерсе тухрĕ. Уçланкă варринчи хĕрлĕ çăлтăрлă палăк тавра чечексем уйрăмах нумай. Палăк умĕнче çын татса хунисем те пур. Шанма та ĕлкĕреймен. Йĕри-тавра тем пысăкăш яка чулсем сапаланса выртаççĕ.Чарăнчĕç.

— Кайса пăхар-и? — темшĕн пăшăлтатса ыйтрĕ Рахим. Тĕлĕнмелле: хирте курăк тахçанах тĕссĕрленнĕ, сарăха пуçланă, кунта вара тин шăтса тухнăн чĕп-чĕрĕ, сипсимĕс. Сывлăш та уçăрах пек. Урăххи те тĕлĕнтерет: палăк патне сукмак çук. Андрей çаврăнса пăхрĕ. Хыçри курăк лапчăнса юлать. Малта вара пĕр йĕр те курăнмасть. Вĕçсе пырса хунă-ши палăк умне чечек çыххине?

Палăк ялкăшса, çутă кăларса тăнăн туйăнать. Пирамида евĕр хăй, шурă чулран. Варринче — сăнӳкерчĕк. Хĕрлĕ çăлтăрлă буденновка тăхăннă, мăйăхлă çамрăк çын ачасем çине ăшшăн тинкерет. Аяла ылтăн саспаллисемпе çырса хунă:

«Николай Васильевич ЧЕКАЛИН.

Ятарлă отряд начальникĕ, 1926 çулта вилнĕ».

— Кам ку, сирĕн тăванăр-и? — шăппăн ыйтрĕ Андрей.

— Çу-ук, — терĕ Рахим шала кайнă сасăпа, каялла чака-чака.

Велохочĕ патне çитсен çеç тĕплĕнрех ăнлантарчĕ:

— Аякран килнĕ комиссар вăл. Граждан вăрçи вăхăтĕнче Абдулла курбаши (атаман) бандине аркатса тăкнăскер. Çав усалсем чикĕ леш енчен киле-киле тапăннă, çынсене çаратса, вĕлерсе хăварнă.

Рахим кăсăкланса, вак-тĕвексем таранах аса илсе калаçрĕ. Ахăртнех, комиссар шăпи ăна хăйне те хытах хумхантарать. Ав мĕн: мăн аслашшĕ, Токубай Хусейнов, Чекалин отрячĕн ертӳçи (çул кăтартаканĕ) пулнă иккен. Вунçиччĕри Токубай таврари çул-йĕре лайăх тĕшмĕртнĕ.

...Хĕрлĕармеецсем басмачсем патне сасартăк пырса тухнă. Хурахсене çапса аркатнă, анчах курбаши темиçе çыннипе тарса хăтăлнă. Комиссар таçта та шыранă вĕсене — çук. Ухтарман пĕр вырăн юлнă: ял çумĕнчи Каланча. Ку чул хысакĕ икçĕр метрсем çӳллĕш, тăршшĕ те самаях. Аякран улăп çĕлĕкĕ пек туйăнать вăл. Çĕр вăтăр, çĕр аллă метр çӳллĕшĕнче хăвăл курăнать.

Ял çыннисем хысак çывăхне пыма та хăранă. Унта шуйттансем пурăнаççĕ текен сас-хура çӳренĕ. Куракансем те пулнă имĕш.

Комиссар ту хăвăлне кĕрсе пăхма шутлать. Хĕрлĕармеецсем чул хысак тăррине хăпарнă.

Чекалин, тăватă салтак тата Токубай вĕренпе ту хăвăлĕ тĕлне çитеççĕ, шала кĕрсе çухалаççĕ. Нумай иртет-и вăхăт, сахал-и, ту хăвăлĕнче пăшалсем кĕрĕслетни, çынсем кăшкăрни илтĕнсе каять. Сасартăк шăтăкран хĕрлĕармеец сирпĕнсе тухать. Çаврăнса сăхсăхать те... аялалла сике парать. Чăл-пар саланнă паллах. Урăх пĕр сас-чӳ те илтĕнмен. Ту çинчи салтаксем те, çĕр çинчи çынсем те нумайччен кĕтнĕ. Комиссар хыççăн кайса пăхма пĕри те хăюлăх çитереймен. Çапла çухалнă пĕчĕк ушкăн.

Комиссар ӳтне пилĕк çултан пач кĕтмен çĕртен ултă метр тарăнăш шăтăкра тупнă. Шăпах хальхи палăк вырăнĕнче. Кам, хăçан килсе хунă вилене — пĕлмеççĕ. Çынни тин çеç вилнĕ тейĕн: ӳчĕ те сивĕнме ĕлкĕреймен. Кăна тупаканни, Рахим тетĕшĕ, ĕнентернĕ.

Çавăнтах пытарнă комиссара. Палăк лартнă. Çынсем малтанласа тăтăшах килсе çӳренĕ. Шкул ачисем чĕрĕ чечексем хунă. Вăхăт иртнĕçемĕн паттăр комиссара манăça хăварнă. Вилтăпри çине курăк, тĕрлĕ ӳсентăран шăтнă. Тăватă çул каялла вара тĕлĕнтермĕш япала пулса

иртнĕ. Çĕр каçа пĕтĕм çумкурăк таçта кайса кĕнĕ. Уçланкă хитре чечексемпе тулса ларнă. Палăк умĕнче тин шăтнă, ниçта никам курман, пĕлмен-илтмен чечек çыххи выртнă. Паянччененех унта. Шанман та, типмен те.

Пулма пултараймасть, — Андрей палăка тепре çаврăнса тĕсерĕ. Тĕрĕсех: чечексем тин татнă пек. Рахимпа иккĕшĕ курăка таптаса хăварнă йĕрсем те çук. Никам та кунта темиçе минут каялла çын пулнă тесе калаймĕ.

Ĕнтĕ уçланкă тахçанах хыçа юлчĕ. Яла çитеспе тин Рахим татăлнă калаçу çиппине сыпăнтарчĕ.

— Куртăн-и, таптаннă курăк чăшăлах çĕкленсе ларчĕ. Усал вăй пурах унта. Калама маннă: комиссар сумкинче темĕнле кĕнеке, икĕ кĕске мăйрака тата вăрăм хӳре пулнă. Вĕсем пĕр хушă Токубай пиччĕшĕн килĕнче упраннă. Каярахпа япаласем Токубай арăмĕн, Амангулĕн аллине куçнă. Манăн мăн асанне пулать ĕнтĕ вăл. Ыррине сахал курнă Амангуль. Ачаллах тăлăха юлнăскере вунтăххăрта чухне вунулттăри Токубая качча панă. Çулталăкран упăшки комиссарпа кайса çухалать. Ывăлне — Акбера, манăн асаттене ĕнтĕ, пĕччененех çитĕнтерет. Вăрçă тухать. Акбер вут-çулăм витĕр тухса киле таврăнаймасть. Кинĕ те часах чирлесе вилет. Пĕртен-пĕр савăнăçĕ, тăван тĕпренчĕкĕ Аббас ятлă мăнукĕ − манăн атте — юлать. Инкек тени ĕмĕрлĕхех çыпăçнă-тăр ват хĕрарăма. Тăватă çул каялла атте те çут тĕнчерен уйрăлчĕ. Сунара кайнăскер, йĕп пек çухалнăччĕ вăл. Виллине виçĕ уйăхран юханшыв хĕрринче тупрĕç, − куççулĕсем шапăртатсах анчĕç Рахимăн. Урăх калаçаймарĕ вăл.

Малта ял курăнчĕ. Сад пахчиллĕ хитре çуртра пурăнать иккен Андрей мăнаккăшĕ.

Рахимăн хумханни иртсе кайман курăнать:

− Андрей, саншăн кулăшла та-и, тен, анчах эпĕ шуйттансем пурах пуль тетĕп. Çынсем те курнă вĕт-ха. Комиссар вилĕмĕ тата. Ăçтан лекнĕ ун сумкине хӳре, мăйракасем? Шуйттан хӳрипе мăйракисем вĕсем. Аттене те çавсемех...

— Ну-и, — пӳлчӗ тантӑшне Андрей,— йӑнӑшатӑн эсӗ. Питӗ нумай вӑхӑт иртнӗ-ҫке комиссар вилнӗренпе. Тата аҫу сунара кайсан вилнӗ терӗн хӑвах.

— Ҫук ҫав, ҫук! Мӑн асаннепе асаннене хумхантарас мар тесе ҫапла каланӑ вӑл. Хӑй комиссар ҫулӗпе ҫӳренӗ. Ҫула тухиччен ун япалисене, кӗнекине чылайччен ҫаваркаласа ларчӗ вӑл. Тен, атте кӗнекере мӗн те пулин тупнӑ?

— Хӑм-м. Комиссар япалисене кӑтарт-ха мана. Юрать-и?

— Вӗсене арчарах тытать ҫав асанне. Ҫывӑхне те ямасть. Туссемпе темиҫе те ыйтса пӑхнӑ, − тӳрре тухма тӑрӑшрӗ Рахим. Ҫакӑнпа калаҫу вӗҫленчӗ. Ачасем каярахпа урамра тӗл пулма килӗшрӗҫ.



## *Иккӗмӗш сыпӑк.* ÇӖНӖ ТУССЕМ

Мӑнаккӑшӗ Андрее хаваспа кӗтсе илчӗ, тӳрех апат ҫитерес тесе ӑшталанма пуҫларӗ. Хирӗҫ ларса ырӑ куҫӗсемпе юратса пӑхрӗ вӑл шӑллӗ ҫине, ашшӗ-амӑшӗ пирки ыйтса пӗлчӗ, ҫав вӑхӑтрах чи тутлӑ ҫимӗҫсене Андрей ҫывӑхнерех куҫарса хума та манмарӗ.

Хырӑмӗ ыратиччен пехлесе тултарнӑ хыҫҫӑн ҫуртпа, мӑнаккӑшӗ хӑйне уйӑрса панӑ пӳлӗмпе паллашрӗ ача. Унтан урама тухса ачасене курма шут тытрӗ. Уйрӑмах ӑна Рахим комиссар ҫинчен каласа пани канӑҫ памарӗ. Ҫывӑх вӑхӑтра комиссар вилтӑпри ҫине тепӗр хут кайса килме, ун ҫинчен тӗплӗнрех пӗлме тӗв турӗ ача.

Тӗрлӗрен шуйттансемпе ытти тӗшмӗше ӗненесси Андрейӗн пуҫӗнче те ҫук-ха. Уҫланкӑри чечексем ҫапла, «авӑнми-хуҫӑлми» сортлӑ пулӗ, тесе шутларӗ вӑл. Такам, комиссара ҫывӑх пӗлнӗскӗр, шутласа тупнӑ ахӑр ҫав сорта. Чечексене кунта килсе акнӑ. Вӑлах кашни кун вӑрттӑн пырса палӑк умне чечек ҫыххи хурать.

Комиссар япалисене тӗплӗнрех тӗпчени пӗрре те пӑс-

мĕччĕ. Мăйракисем качакан, хӳри вăкăрăн пуласси пирки иккĕленме те кирлĕ мар. Комиссар кĕнекинче те ытла тĕлĕнмелле япаласем пулмалла мар. Çавах тĕплĕнрех тишкерни те чăрмантармĕ. Ку юмахăн тупсăмне тупмаллах. Тупма вара ăна чи малтан Рахим пулăшма пултарĕ. Мăнаккупа юнашар пурăнатăп, тесе каларĕ вĕт-ха. Хăш енче-ши?

Çĕнĕ туса нумай шырамалла пулмарĕ. Андрей мăнаккăшĕн çуртне хирĕç, урам урлă пурăнать иккен вăл. Пахчаран тухсанах ăна, велоход юсаканскере, асăрхарĕ Андрей.

Çĕнĕ тусне курсан Рахим машини айĕнчен тухрĕ, аллисене çĕтĕк татăкĕпе шăлкалама пуçларĕ.

— Вăт маттур, Андрюш. Эпĕ хам кĕме шутланăччĕ ĕнтĕ. Ялта ют, никама та палламасть, тен, урама тухма та хăрать пулĕ, тенĕччĕ.

— Камран хăрамалла кунта? Калатăн та эсĕ.

— Ку тĕрĕс, хăрама пирĕн халĕ никама та кирлĕ мар. Ĕлĕкрех банда пурччĕ кунта. Гринька Адамович ертсе пыратчĕ. Урама тухма хăраттăмăр ун чух. Виçĕ çул каялла пулса иртрĕ çакă. Пĕр çул аслăрах вăл манран. Халĕ вунпиллĕкре ĕнтĕ. Çӳлтикасри ачасене хăй тавра пухнăччĕ те вăл, пире, аялтисене, иртсе кайма памастчĕ.

Малалла Рахим виçĕ çул каялла яла имшеркке ача, Дима Макаров килни, çавăн хыççăн пурнăç пачах улшăнса кайни çинчен каласа пачĕ. Дима ашшĕне, офицер-пограничника, кунта Даша аппа упăшки вилнĕ хыççăн застава пуçлăхĕ пулма янă иккен. Малтанхи кунах урама тухсан Димана Гринька «бандинчи» ачасем тытса чарнă. Хăйсене никам та çĕнеймессе шаннăскерсем, кун пек «паттăр» ĕçсене тума хăнăхнăскерсем, пĕр ача çине тăваттăн тапăннă вĕсем. Анчах Дима самбопа туслă пулнă иккен, йывăрпа пулсан та тăшмансене часах парăнтарнă, хăваласа янă. Çавăнтанпа «çӳлтисем» аялти кас тĕлне маннă. Дима вара хăйĕн ушкăнне пуçтарнă. «Мĕнле суйланă вĕсене, паллă мар. Анчах та ушкăнри ачасем пурте кăштах

урăхларах — «тĕлĕнтермĕшсемлĕ» пулнă. Çапла ят панă вĕсен уйрăмлăхне ушкăнпа уйăхран пĕрлешнĕ Гриня Адамович. Хайĕн ушкăнне ун чухне салатса янă ĕнтĕ вăл.

Ушкăнрисем ытти ачасенчен чылай енĕпе уйрăлса тăнă. Час-часах пĕрле пуçтараннă вĕсем, сасăпа кĕнекесем вуланă, вĕсене сÿтсе явнă. Пурнăçра тĕл пулакан мĕнпур тĕрĕсмарлăха хирĕç кĕрешме тĕллев тытнă вĕсем. Пĕр-пĕринпе нихăçан та вăрçăшман. Яланах килĕшÿ патне пырса тухма пултарнă. Шкула формăпа çеç çÿренĕ вĕсем.

— Пĕлтĕр кукка, моряк, чикĕ леш енчен чаплă шăлавар илсе килчĕ, джинсы текенскерне. Ĕненетĕн-и, пĕрре те тăхăнман-ха эпĕ ăна. Шăпах кукка килес кун Гриня урама çавăн пек шăлаварпа тухрĕ, Дима çийĕнчех ярса илчĕ ăна; «пирĕнтен пуянрах пурăннине кăтартасшăним? Ун пек япала мана та илсе пама пултараççĕ, хам ыйтсан... Анчах Давида... Ашшĕ çук унăн, амăшĕ çинче тата икĕ ача. Рахимăн та ун пек шăлавар туянма укçа çук. Çавăнпа та ăна урăх тăхăнмасан лайăхрах пулĕ», тет. Шăпах çапла каларĕ. Унтанпа эпир пĕр-пĕринчен нимĕнпе те улăшăнса тăмастпăр. Хĕрсем те пĕр пек тăхăнаççĕ, — ăнлантарса пачĕ Рахим.

— Сирĕн ушкăнра хĕрсем те пур-и? — тĕлĕнчĕ Андрей.

— Паллах, çиччĕн эпир мĕнпурĕ. Виçĕ хĕр, тăватă арçын ача. Тĕрлĕ халăх ачисем эпир. Дима интернационалла ушкăн, тет пирĕн пирки. Хăй вăл вырăс, Гриня — белорус, Давид Аронштам — еврей, Маре Кальвялике — литовка, Надя Голубева мăкшă хĕрĕ, Айшагуль Кадырбаева — каракалпачка, — хирĕç тавăрчĕ Рахим.

— Чăнах та интернационал иккен, — кулса ячĕ Андрей. — Шăпах эпĕ, чăваш, çитместĕп те кунта. Сисетĕп, Рахим, санăн юлташусем манпа пĕр шухăшлăскерсем. Урăхла шухăшланипех ялта тантăшсемпе пĕр чĕлхе тупаймастăм. Халиччен чăн-чăн пĕр тус та пулман темелле. Мĕнле вара, йышăнатăр-и мана хăвăр ушкăна?

— Йышăнас ыйтăва ачасем татса парĕç. Атя пĕрле, вĕсемпе паллаштаратăп сана. Халĕ шăпах яланхи вырăна, лапсăркка йывăç айне пуçтарăнма кирлĕ вĕсем.

— Питĕ хавас эпĕ, çавах та маларах комиссар япалисем çине пăхса илес килет-çке. Хăвăн халапупа хумхантарса ятăн та... Санăн аçу вĕсене тишкернĕ хыççăн çухалнă пулсан мĕн те пулин шыраса тупайнах ĕнтĕ унта.

— Çук, Андрей, нимĕн те пулаймасть, ахăр. Асанне памасть терĕм-çке. Кĕнекере, чăнах та, мĕн те пулин çырса хăварни кирлĕ пулмалла пек. Халĕ пуçа пырса кĕчĕ çакă. Анчах хăтланса пăхма та кирлĕ мар. Кĕнеке арчара, уççи асаннере. Атя, ачасем патне каятпăр луччĕ. Кайма та кирлĕ мар иккен, авă хăйсем килеççĕ.

Урампа ачасен ушкăнĕ килет иккен. Юрласа, стройта пыраççĕ вĕсем.

— Чăнах та ыттисем пек мар кусем. Туслашма та пулĕ, апла пулсан. Лайăх юлташсем пулаççĕ, — шухăшларĕ Андрей.

Килте юлташсем пулман унăн темелле. Йыша юратаканскерĕн ыттисем патне чунĕ туртнă, анчах ĕмĕчĕсем пурнăçланайманнине кура часах писнĕ вăл вĕсенчен. Çапла вара вунтăватта çитсе те лайăх юлташ тупайман. Çавăнпа та Рахим тусĕсемпе паллашма май пулнишĕн шутсăр савăнчĕ вăл.

Рахим килĕшет ăна. Пĕрре курсах кăмăлне кайрĕ. Унăн юлташĕсем чăн-чăн юлташсемех пулсан, япăхах мар ĕнтĕ. Паллаштарнă хыççăн хăйсем те кăсăкланчĕç ахăр Андрейпе, тинкерсе пăхрĕç ун çине, унтан черетпе аллисене тăсса парса паллашрĕç.

— Дима, тесе татăклă каласа хучĕ куçлăхли, Андрей аллине çирĕппĕн чăмăртаса.

— Гриня, — терĕ тăсланки. Давид имшерккескер, хура, кăтра çӳлĕскер пулчĕ. Маре — кăвак куçлă, ылтăн çӳçлĕ, Айшагуль — кăштах хĕсĕкрех, хитре хура куçлă.

Голубева Надьӑн ҫырӑ куҫӗсенче чеелӗх палӑрать. Кунсӑр пуҫне хӗрлӗрех ҫӳҫсемпе тата вӑйлӑ арҫын аллисемпе палӑрса тӑрать иккен вӑл.

Паллашнӑ хыҫҫӑн Андрей хӑйӗн пирки, тӑван ялӗ ҫинчен каласа пачӗ. Туслӑ калаҫу пуҫлансан Рахим Андрее ушкӑна илме сӗнчӗ.

— Эпир ӑна йышӑнтӑмӑр ӗнтӗ,– кулса ячӗ Дима. — Маттур ача, чунӗ пур, ахӑр. Этем нушине хӑйӗнничен ҫӳлерех хурать. Ун пеккисене епле йышӑнмӑн? Ав, Гриня ӗлӗк еплерехчӗ, ӑна та йышӑнтӑмӑр.

— Чӑн-чӑн туссем пулманнипе урӑхларахчӗ эпӗ. Халӗ сирӗншӗн ҫулӑм ӑшне кӗме те, шыва сикме те хатӗр,— хӗрелсе кайрӗ Адамович.

— Андрее илмеллех пирӗн ушкӑна. Пӗр ӗҫре пирӗнпе пӗтӗмпех килӗшет вӑл, эпир татса парайман ыйтӑвӑн тупсӑмне те тупрӗ ӗнтӗ, – терӗ Рахим.

— Епле ыйту, мӗнле тупсӑм, хӑш ӗҫ пирки калаҫатӑн эсӗ? — шавласа кайрӗҫ ачасем.

— Эпӗ ӑна комиссар вилтӑприне кӑтартрӑм. Кӑсӑкланса кайрӗ унпа. Палӑк ларакан уҫланка тӗплӗнрех тӗпчемелле, тет. Тата комиссарӑн ҫырса хӑварнисем пулма кирли ҫинчен те каларӗ...

— Ҫырса хӑварнисем юлнӑ. Тӗрӗс ҫакӑ. Маттур иккен эсӗ чӑнах та, Андрюша. Килме ӗлкӗрейменъ, пирӗн ӗҫе хутшӑннӑ ӗнтӗ, — ачана хулпуҫҫинчен юлташла ҫапса илчӗ Дима.

— Рахим комиссар япалисем хушшинче темле кӗнеке пурри ҫинчен каларӗ мана. Ман шутпа, унта комиссар мӗн те пулин ҫырса хӑварнах. Рахим хӑйӗн ашшӗ ҫав кӗнекене вуласа ларнине курнӑ, тет. Ҫакӑн хыҫҫӑн темиҫе кунтанах ҫухалнӑ вӑл. Апла пулсан, кӗнекере мӗн те пулин вуласа пӗлнӗ ӗнтӗ, комиссар йӗрӗпе кайнӑ. Комиссар шӑпиех кӗтнӗ ӑна, пӗлетӗр, — хӑйӗн шухӑшӗсемпе паллаштарчӗ Андрей.

— Хамӑр епле ҫитеймерӗмӗр ха эпир ҫак шухӑш патне? Э, ачасем. Пурте питӗ ансат-ҫке. Хӑвӑртрах ҫав

кёнекене тупса вуласа тухмалла та, — Айшагуль чă-тăмсăррăн çивĕтĕсемпе чĕтрентерсе илчĕ.

— Нимĕн те тухаймасть. Асанне памасть, — каллех хăйĕнне печĕ Рахим.

— Памасан вăрламалла, — аллине сулса илчĕ Гриня, — арча уçасси маншăн нимĕн те мар, карчăка çеç калаçтарса тăрăр, эпĕ вара чик-чак, хатĕр те пулĕ.

— Çук, апла юрамасть, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекенсем тетĕр хăвăра... Ман шутпа ку тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни пулмасть, — терĕ Андрей.

— Тĕрĕс калаçатăн. Ку çул-йĕрпе эпир хамăр та каймастăмăрччĕ, — килĕшрĕ Дима.

— Эпĕ усал тăвас тесе мар, карчăка уншăн нимĕнле сиен те пулмастчĕ. Пире — пысăк усă, − каллех хĕрелсе кайрĕ Гриня.

— Вăрлама юрамасть. Мĕн те пулин урăххи шутласа тупмалла, — терĕ Надя.

Дима пӳрне вĕçĕпе куçлăхне тӳрлетрĕ те кулса ячĕ.

— Эврика, ачасем, шутласа тупрăм.

— Мĕн тупрăн? Ăçта? — тĕлĕнсе пăхса илчĕ тусĕ çине Маре.

— Тупмарăм, шутласа тупрăм. Эпир урăхла ĕçлĕпĕр, чеелĕхпе.

— Епле тата вăл, чеелĕхпе, каллех улталаса-и?, — тĕксĕмленчĕ Надя...

— Çук, никама та улталамăпăр эпир. Рахим мăнасла-мăшĕ патне кайăпăр та комиссар япалисене кăтартма ыйтатпăр. Пилĕк минутлăха çеç ыйтатпăр, музей валли экспонатсем шыратпăр тесе. Кайран кăштах чееленĕпĕр, эсир карчăка калаçтарса тăнă вăхăтра эпĕ кĕнекери страницăсене фотоаппаратпа ӳкерсе илетĕп.

Ачасем шавласа кайрĕç. Пĕр шухăшлă пулмарĕç вĕсем ку ыйтупа малтанласа. Хĕрачасем ку çавах ултав пулать тесе хирĕçлерĕç, арçын ачасем Дима шухăшне ырларĕç.

Ыйтăва Андрей, тавлашăва хутшăнмансскер, татса пачĕ.

— Ман шутпа нимĕнле ултав та çук кунта. Тĕрĕсне калатпăр-çке карчăка, экспонат шыратпăр тесе. Эпĕ ăнланнă тăрăх музей валли япаласем сире чăнахах та кирлĕ. Эпир вĕсене тимлĕ пăхни е ӳкерсе илни пĕр япалах вăл. Анчах та ку ĕçе Рахима илмелле мар. Ăна курсан мăнасламăшĕ пирĕн çине те урăхла пăхĕ.

— Эсир пурте… ку ултав мар тесе шутлатăр пулсан манăн килĕшмелли çеç юлать, — терĕ Айшагуль.

Надяпа Маре те ыттисемпе килĕшрĕç. Çапла майпа ачасем пĕр шухăш патне пырса тухрĕç. Шăпах çак шухăшран пуçланчĕç те Андрей Селивановпа унăн тусĕсен тĕлĕнмелле мыскарисем…



## *Виççĕмĕш сыпăк. КОМИССАР ÇЫРНИСЕМ*

Рахим мăнасламăшĕ патне Андрейпе Димăна тата Айшагуле яма палăртрĕç ачасем, хăйсем урамра юласшăнччĕ. Анчах сасартăк калинкерен ватă пулин те çамрăкла вăр-вар карчăк тухсан тĕллевсене улăштармалла пулчĕ.

— Шăпах çавă ĕнтĕ вăл, Рахим мăнасламăшĕ, — пăшăлтатса пакарĕ Надя Андрей хăлхинчен.

Хĕрарăм çав вăхăтра пушă витрисене çĕре лартрĕ, кĕвенте çине таянса хыттăн:

— Эсир кунта мĕн пасар тăватăр? — терĕ.

— Шкулта музей тăвасшăн та эпир, хисеплĕ Амангуль аппа, граждан тата Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçисемпе çыхăннă япаласем шыратпăр. Рахим сирĕн Чекалин комиссар япалисем пур терĕ. Пăхса илесшĕнччĕ, çавăнпа сирĕн пата килтĕмĕр те, — сăпайлăн каласа хучĕ Айшагуль.

Карчăк мăнукĕ çине шанмасăртараххăн пăхса илчĕ.

— Акă мĕн шутласа тупрăн пулать иккен. Тахçантанпах комиссар япалисене ыйтатăн манран. Памарăм та ачасем урлă илес терĕн пулать. Ватăскере улталама шут тытрăн иккен.

— Çук, мĕншĕн улталамалла вара пирĕн сире? Чăнах та истори учителĕ ыйтнипе япала шырама тухрăмăр. Сирĕн пирки малтан нимĕн те пĕлмен эпир, Рахим каларĕ. Ан çиленсемĕр, асанне, — ачасем аптраса ӳкнине кура пулăшма васкарĕ Дима. — Эпир япаласем çине пăхса илетпĕр çеç. Нимĕн те илместпĕр. Пилĕк минутлăха кăтартăр, тархасшăн.

Карчăка чылай ӳкĕтлемелле пулчĕ вĕсен.

— Анчах пурте кĕместĕр, — парăнчĕ вăл юлашкинчен. — Пĕлетĕп эпĕ сире. Аллаха шĕкĕр, çитмĕл тăхăр çул çĕр çинче пурăнатăп. Сирĕншĕн, çамрăксемшĕн, хакли нимĕн те çук. Япаласене илсе пĕр шелсĕр кăларса пăрахма пултаратăр, маншăн вĕсем ылтăнран хаклă. Токубай, чунăмçăм, мĕн тума çамрăклах пăрахса кайрăнха мана. Ывăлăмпа мăнукăма та ху патна ытла ир илтĕн,— йĕрсе ячĕ вăл.

— Ан йĕрсем, асанне, лăплан. Ачасене япалсене кăтарт, эпĕ шыв ăсса килетĕп, — витресене çĕклерĕ Рахим. Дима, Андрей, Айшагуль тата Надя карчăк хыççăн пӳрте кĕчĕç.

— Эсир асăрханарах тыткалăр, япаласем кивĕ, çĕтĕлме пултараççĕ, маншăн вĕсенчен хаклăраххи нимĕн те çук. Савнă Токубайран килнĕ хыпар пекех туйăнать. Кăштăртатса кĕтесре ларакан пысăк арча патне пычĕ карчăк, чылайччен çăрапа аппаланчĕ, унтан нафталин шăрши çапнă япаласем хушшинче тем шырарĕ. Чылайран унтан пĕчĕк тĕркем кăларчĕ, ăна чĕркенĕ пусмана асăрханса сирчĕ.

Çакна палăртмалла, ачасем пачах урăххине кĕтнĕччĕ. Тĕркемре маузерăн кивĕ, вăхăта пула çуркаланса пĕтнĕ йывăç кобури тата Пушкинăн революцичченех пичетленĕ сăвă кĕнеки çеç иккен. Урăх нимĕн те çук.

— Çакă анчах-и? — хумханнипе Дима сасси чĕтренсе тухрĕ.

— Тата мĕн пулмалла кунта? — Çакă анчах. Комиссар, астăватăп, çак кĕнекене шутсăр юрататчĕ. Пушă вăхăтра тӳрех ăна тытатчĕ. Мана та темиçе сăвă вуласа панăччĕ. Вырăсла та кăшт çеç ăнланаттăмччĕ-ха ун чухне. Çамрăк пулнă эпĕ çав вăхăтра, вунулттăра анчах. Токубайпа тин çеç пĕрлешнĕччĕ, ача кĕтеттĕмĕр. Эпĕ тăлăх ӳснĕ-çке... Токубай ватă, чирлĕ амăшĕпе пурăнатчĕ. Эпĕ вăйлăскер, ĕçе юратаканскерччĕ. Вунпиллĕкри ачана качча пачĕç. Ох, ох, ох, ăнаймарĕ вĕт пурнăç. Çухалчĕ манăн Токубай, ывăлăмăра та, Аскера, курса юлаймарĕ.

Карчăк каллех йĕрсе ячĕ. Хĕрачасем ăна май пур пек лăплантарма пикенчĕç. Андрей аллинчи кобурана шухăшлăн çавăркаларĕ.

Сасартăк кобураран хăмăртарах тĕслĕ çăмламас япала курăннине асăрхарĕ вăл. Кобурана хăвăрт уçса вăрăм хӳре тата икĕ çап-çутă мăйрака туртса кăларчĕ.

— Ку тата мĕн? — тĕлĕннине пытараймарĕ вăл. Пурте пуçĕсене ун еннелле çавăрчĕç. Анчах та ку мĕнле япала пулнине чи малтан Амангуль тавçăрса илчĕ. Ачаран мăйракасемпе хӳрене туртса илсе вăл вĕсене чӳречерен вăркăнтарчĕ.

— Акă вăл, ылханлă шуйттан. Çавă туртса илчĕ манăн упăшкана. Токубая çавă вĕлерчĕ, — çĕнĕрен йĕме тытăнчĕ вăл.

— Кайрăмăр, чăрмантарар мар çынна. — Дима кĕнекене асăрханса сĕтел кĕтесне хучĕ, тусĕсене хăй хыççăн тухма хистерĕ.

— Эсир урама тухăр, эпĕ халех, — терĕ вăл пахчана тухсан, йывăççем айне чăмнă май. Тепĕр минутран урамра вăл тусĕсене хăваласа та çитрĕ, мăйракасемпе хӳре тытнă аллисене çӳлелле çĕклесе ташша ячĕ. − Питĕ лайăх пулса тухрĕ-çке. Хӳри чăнни мар иккен тулĕк, пусмаран ăсталанăскер, мăйракисем вара чăннисемех, тĕлĕнмеллескерсем, вăкăр-качака мăйракисем патне

çывăха та пымасть, — савăнчĕ вăл, хăйне хупăрласа илнĕ тусĕсем çине хаваслăн пăхса.

— Савăнмалли нимĕн те çук кунта, — унăн хулпуççийĕ çине аллине хучĕ Андрей. — Комиссар çырса пынисене тупаймарăмăр-çке. Ăнланмастăп, мĕн сасартăках тулалла вирхĕнтĕн эсĕ. Кĕнекене тĕплĕнрех тишкермеллеччĕ, кобура ăшĕнче те, тен, мĕн те пулин тупăнатчĕ.

— Нимĕн те тупăнмастчĕ унта урăх. Мĕн тупмаллине тупрăмăр ĕнтĕ эпир. Акă вĕсем, çырса пынисем, – Дима хĕвĕнчен пĕчĕк фотоаппарат туртса кăларчĕ. Комиссар кĕнекери таса вырăнсене çырса пынă иккен. Эпĕ вĕсене тупса ӳкерсе илме ĕлкĕртĕм.

— Ан тĕлĕнтер. Мĕнле пултаратăн вара. Эпĕ нимĕн те асăрхамарăм-çке?

— Эпир те асăрхамарăмăр. Хăçан ĕлкĕрчĕ-тĕр, — терĕç хĕрачасем те.

— Эсир ун чухне асаннене лăплантараттăр. Андрей сире пулăшрĕ тата кобурана тĕпчерĕ. Эпĕ кĕнекене чӳрече çине хутăм та сирĕн пата кутăн тăрса ӳкерсе илтĕм,— ăнлантарса пачĕ Дима.

— Эсĕ мĕн, яра куна фотоаппаратпа çӳретĕн-им? — ыйтрĕ Андрей.

— Çук, тинтерех çеç, кунта тухса килес умĕн, илнĕччĕ. Шăпах кирлĕ пулчĕ те. Унщăн килелле чупасси çук. Санăн вара, Андрей, кӳренме кирлĕ мар. Маттур эсĕ. Кобурана уçса пăхрăн. Унта япаласене тупнăранпа та никам та пăхмасса пултарнă. Кобурапа кĕнеке полевой сумкăра пулнă теççĕ, Рахим аслашшĕ, Аскер тете, вăрçа тухса каяс умĕн сумкине хăйпе пĕрле илнĕ пулать. Кобурапа кĕнекене вара хăйĕн амăшĕ — Амангуль патĕнче хăварнă. Вăл вĕсене арчана чиксе хунă та халиччченех вĕсем унта тусанланса выртнă.

— Ун пекех мар. Хӳрепе мăйрака çинчен илтнĕ эпĕ. Вĕсене манăн атте тупнă пулас. Комиссар çырнисене те вăл тупса вуланă. Çухаличчен виçĕ кун маларах аннепе мăнасаннене мăйракапа хӳре пирки каласа панине

астăватăп. Чăнах та, кăтартмарĕ вăл вĕсене, лешсем ĕненмерĕç те пулĕ. Эпĕ аван астуса юлтăм, ун чухне чылай пĕчĕк пулсан та.

— Вăл тупма та пултарнă, паллах. Анчах чи пахи — эпир вĕсене тупни. Ку вара темле вăрттăнлăх уççи пулма кирлĕ. Ахальтен мар упранă вĕсене комиссар. Тен, вĕсем — çырнисен хушăвĕ?

— Мĕн çырнă вара комиссар, вуласа пăхасчĕ, эсĕ ӳкерсе илнĕ вĕт вĕсене, вуласа та пăхрăн, ахăр?

— Вулама хăтланса та пăхмарăм, ачасем. Часрах ӳкерсе илесчĕ терĕм. Питĕ васкарăм.

— Апла пулсан атя, ӳкерчĕксене хăвăртрах кăлар, питĕ пĕлес килет, — Гриня фотоаппарата ярса тытрĕ.

— Çук, ачасем, паян пулмасть пулĕ ĕнтĕ ахăр. Каç пулса килет. Выльăхсене хăваласа кĕртмелле тата. Авă, кĕтӳ кĕрет. Хăярсене шăвармалла, каткана шыв тултармалла. Ĕç нумай. Тĕттĕмленсен кăларатăпах вĕсене. Атя ирхине вуннăра лапсăркка йывăç патĕнче тĕл пулатпăр, пĕтĕмпех сӳтсе яватпăр.

Çапла калаçса татăлчĕç те.



## *Тăваттăмĕш сыпăк.*
## *КОМИССАР КĔНЕКИН ВĂРТТĂНЛĂХĔ*

Ирхине. Андрей каткана шыв тултарчĕ те апат çиме пӳрте кĕчĕ. Сĕтел хушшине лрса ĕлкĕрейменччĕ, Рахим персе çитрĕ.

— Кайрăмăр-и? Ыттисем пухăнчĕç пулĕ. – Мăнаккăшĕ хăтăрнине пăхмасăрах тухса вĕçтерчĕç. Пĕве хĕррине, йывăç айне пурте çитме ĕлкĕрнĕ. Дима ĕнер ӳкернĕ ӳкерчĕксем алăран алла куçаççĕ.

— Саспа вула, — терĕç Макарова.

Пурте шăпланчĕç.

«...Ывăнтăм. Çак шăтăкра канас. Тата çырмалла, анчах çыру кĕнекине çухатрăм. Ĕнер, ним çук çĕртен çав япала сиксе тухсан кăларса ӳкертĕм ахăр. Купарча халĕ те ыратать. Аванах лектерчĕ, мур илесшĕ. Аванах хăрарăм ахăр, чупа-чупа аташсах кайрăм. Халĕ, акă, кунта шăхăрса ларма тивет.

Тахçанах карап çинче пулмалла. Епле майпа çак

инкеке лекрӗмӗр-ха? Калидуил, манӑн пӗчӗк маттур тусӑм. Халӗ те куҫ умӗнче пурте. Абдулла чӗп-чӗрӗ юн, Калидуил пуҫсӑр. Курбаши чӗрех юлнӑ-ши? Тен, ман пекех ларать, выҫӑскер, пӗр шӑтӑкра, шӑлӗсене шаккаса. Ҫавах та ӑслӑ, хӑюллӑ ҫын вӑл. Пачах урӑхла ҫын тесе шутланӑ эпӗ ӑна ҫӗр хӑвӑлӗнче тӗл пулнӑ хыҫҫӑн. Шӑпах ҫавӑн чухне пуҫланчӗ ӗнтӗ ӗҫ-пуҫ, чи малтан унта олгузсен виллисене тупрӑмӑр-ҫке.

Мӗскӗн Петров епле хӑрарӗ пулӗ, хӑй умӗнчех шуйттана курсан. Шуйттанран типсе кайнӑ пуҫӗ ҫеҫ юлнине пӗлмен вӗт вӑл. Тепӗр ыйту, кам ҫӗр хӑвӑлне олгузӑн типсе кайнӑ пуҫне пӑрахса хӑварнӑ? Карап ҫинче пилӗк ҫул пурӑнса та ҫак ыйту ҫине хурав илеймерӗм.

...Ҫапла, Абдулла. Унсӑрӑн...

...Кӑмӑлӑм ҫемҫелсе кайрӗ пулас. Летописец пек пурне те ҫырса кӑтартас килет. Тепӗр тесен шӑпах летописецҫке эпӗ, манччен никам ҫырманни пирки аса илетӗп, ҫынсем ют планета представителӗсемпе тӗл пулни пирки...

... Пуҫ ҫаврӑнать, ҫавах аван ҫапса хӑварчӗ мана. Пуҫ мими кисреннӗ ахӑр, ҫавӑнпа аташмалла мар ҫӗрте ҫул ҫухатнӑ эпӗ...

... Сехете ӗненес пулсан тата тепӗр талӑк иртрӗ. Эпӗ ҫавах ку хӑрушӑ ҫӗр хӑвӑлӗнче, тухма пӗлейместӗп. Ахалех ку еннелле кайрӑм. Ишӗлчӗксене тасатса палланӑ ҫула уҫмаллаччӗ. Ҫук, парӑнмалла мар манӑн тем пулсан та. Ҫӗр ҫине, ҫута тухмаллах. Унта вара олгузсене эмел рецептне пӗлтерме май тупӑттӑм. Пирӗнсӗр пуҫне никам та пӗлмен вӗт ӑна. Медицина роботне пӗлтермеллеччӗ хӑть. Тепӗр 50-60 ҫултан хӑрушӑ чир каллех пуҫне ҫӗклеме пултарать. Эпӗ хам ҫырса пынисене никама парса та хӑвараймарӑм. Каллех пуҫ ҫаврӑнать.

... Хунар тахҫанах сӳнсе ларнӑ. Калидуил мӑйракисем юнашар пулни аван. Тӗттӗмре ачашшӑн ҫуталса выртаҫҫӗ, мӑйракисем ҫеҫ мар, олгуз ачи хӑй те манпа юнашар тейӗн.

...Тата тепӗр икӗ кун иртрӗ. Хырӑмра епле касать?!

Кăмăл сӳрĕк... Кӳрентерет питĕ. Ăнăçсăр пулчĕ çулçӳрев. Карап çине вĕсене юн кирли пирки кам пĕлтерĕ ĕнтĕ халĕ?

... Вилнĕ хыççăн та пулăшатăн мана, Калидуил. Акă халĕ ларатăп та мăйрака çутипе çыратăп. Мăйракисемпе тумтир çине илемшĕн çĕлесе хуракан хӳрене ăна асăнма хампа пĕрле илтĕм эпĕ. Чи çывăх тусчĕ-çке вăл манăн. Шăпах ăна пула ачасем чирлеменни пирки пĕлтĕм. Мĕншĕн çапла-ха вăл. Питĕ кăсăклă япала çутçанталăк. Олгузсенчен Çĕре ачасем хăтарма пултараççĕ. Чире те вĕсемех çĕнтерĕç. Ыттисен вăй çитмест çакна тума. Каярах ăнлантăм эпĕ çакна, халĕ ниепле те тухаймăп ĕнтĕ кунтан.

... Пĕр талăкран, е эрнерен çыратăп. Кунсен шутне çухатрăм. Сехете çĕмĕртĕм, çĕр хăвăлĕнче мĕн чухлĕ пулнине ниепле калаймăп халĕ. Тин çеç флягăри юлашки шыва ĕçсе ятăм. Халь юрать ĕнтĕ. Халĕ эпĕ ирĕкре тесен те йăнăшах мар. Тем чухлĕ аташса çӳренĕ хыççăн çак хăйăр шăтăкне лекрĕм. Чаврăм-чаврăм. Ăçтан вăй тухрĕ-ши? Çĕр çине тухатăпах тени хал пачĕ-тĕр. Хăйăрлă çĕр ишĕлсе анасса шутламан та. Каялла каймалли çул хупланса ларчĕ. Малта та çул çук. Çут тĕнче çутине те куратăп. Мамăк пĕлĕтсен чуппине те уйăратăп. Инçеçке унта çитме, инçе. Шăтăк ытла тарăн. Çын пулăшăвĕсĕр тухаймăп. Кам та пулин килсе пăхĕ, асăрхĕ, тен, пĕчĕк шăтăка... Никам та çук. Ах, ăш чăтма çук пăвса ыратать. Ĕçес килет... ĕçес килет... Тул çутăлчĕ. Кăранташ пĕр пăт йывăрăш. Вăй çук. Сывă пул...».



## *Пиллĕкмĕш сыпăк ХАТĔРЛЕНӲ*

— Пĕтрĕ-и? Урăх пĕр сăмах та çук-и? — Дима аллинчи хутсем çине кармашсах пăхрĕ Надя Голубева.

— Тата мĕн кирлĕ? Комиссарăн юлашки пилĕк çулти пурнăçне аванах тĕшмĕртме пулать, — терĕ Андрей.

— Пĕтĕмпех, асту. Эпĕ нимĕн те ăнланмарăм, — сарлака хулпуççийĕсене сиктеркелерĕ Гриня.

– Ăнланаймăн та. Çутçанталăк сана пысăк пӳ панă, ăспа вара тивĕçтерме маннă, — йĕкĕлтешрĕ Давид.

Хăй, Гринькăн пысăк чăмăрне тутанасран хăраса, чалт çеç сиксе ларчĕ айккинерех.

— Ан хирĕçĕр, тусăмсем, — Андрей пĕр-пĕрин çине çăвăр автанла пăхакан ачасем хушшине тăчĕ. — Итлĕрха ман шухăша. Пĕтĕмпех мар, çапах нумайăшне ăнлан-

тăмăр. Комиссар Абдулла ту хăвăлне пытаннине тавçăрнă. Хĕрлĕармеецсемпе шăтăка кĕрет. Рахимăн мăнаслашшĕ те пĕрлех пулнă. Абдулла курбаши хурахĕсем çывăрнă. Анчах хăрушлăха сисеççĕ. Курбаши ту хăвăлĕнчи çулсене тĕшмĕртнĕ пулас. Хăй çыннисене вăрттăн çулпа ăсатать. Хăвăлти тĕп çул юпленсе кайма кирлĕ. Ахăртнех пĕр çулĕ ункă евĕр. Курбаши пере-пере ун тăрăх чакать, хĕрлĕармеецсене хăй хыççăн астарса каять. Шăтăка кĕнĕ çĕрте пĕр салтак кăна, Петров текенскер юлать. Курбаши ункă çул тавра чупса çаврăнать те Петров умне пырса тухать.

Ту хăвăлĕнче вырта-вырта хытсах кайнă темĕнле шуйттан пек чĕрчун пуçне (комиссар ăна олгуз пуçĕ тет) тытнăскер, айван салтака хăратсах ӳкерет. Петров сехри хăпнипе ту хысакĕ çинчен ӳксе вилет.

Курбашие йĕрлесе комиссар ушăнĕ темле олгузсен карапĕ çине çакланать. Камсем вĕсем олгузсем — пĕлместпĕр-ха халлĕхе. Шуйттан текеннисемех мар-ши? Комиссар карапри олгузсене пăлхава çĕклет.

— Олгузĕсем çынсемех-ши? Шуйттансем çук вĕт ниçта та, — кĕтмен çĕртен пӳлчĕ Айшагуль.

— Космосран килнĕскерсем пулĕ, — чăтса тăраймарĕ Дима та. — Темиçе пин çул ĕлĕкрех çĕр çине вĕçсе килнĕскерсем, теме пула каялла вĕçсе каяйман. Юлнă вара кунтах. Карапĕ çĕрпе хупланнă. Шуйттан тенине çынсем туртса кăларнă. Тĕлĕнтермĕш чĕрчунсене ят памаллаçке-ха.

— Кайран олгузсем йывăр та хăрушă чирпе чирленĕ. Унтан ачасем çеç сыватма пултараççĕ. Ăт, эпир ачасем. Апла олгузсене те çăлаятпăр, — шухăшне пĕлтермеваскарĕ Гриня та.

— Чарăн-ха паврама, — чарчĕ тантăшне Дима. —Андрей каласа пĕтертĕр. Ун çыхăнуллă, яка тухать.

— Мĕнех, малалла-тăк, малалла, — килĕшрĕ Андрей. — Димăпа Гриня тĕрĕсех палăртаççĕ пулĕ. Ахăртнех, олгузсем шуйттан сăнлăрах: сысна пуçĕллĕ, мăйракаллă.

Вёсен карапё питё пысăк, пиншер пўлёмрен тăрать. Усал чиртен хён кураççё олгузсем. Комиссар пăлхав хыççăнах чирпе кёрешме майсем тупнă. Пилёк çул пуранннă вăл салтаксемпе олгузсем патёнче. Пёррехинче хăйён юлташёсемпе пёрле аташса кайнă. Çул шыранă май басмачсене тёл пулнă. Абдулла, король пулса тăнăскер, темшён çёр çине тухма ёмётленнё куранать. Хаяр çапăçура хёрлёармеецсем пурте вилеççё. Абдулла курбаши тарать. Комиссар пёр олгуз ачипе ăна йёрлесе çўрет. Каярахпа комиссар Абдуллана тёл пулатех. Лешё олгуз ачине гранатăпа сирпётсе ярать ахăр! Комиссар курайми тăшманне юлашки патронпа вёлерет. Хăй темле шăтăка лекет. Çавăнтах пётет вара Чекалин. Çутатакан мăйракасем пирки калама та аптăратăп.

— Кунта ним ăнланмалла марри те çук, — юлташне пулăшма васкарё Дима. — Комиссар мăйракисем çутатнине пёлнё, çавăнпа хунар вырăнне усă курнă. Олгузсем тёттёмре мăйракасем кăларакан çутăпа çўреççё пулас.

— Ну, култаратăр та эсир! Ёненес килмест. Атом ёмёрёнче пурăнатпăр. Космоса карапсем вёçеççё. Çын Уйăх çинче, усă космосра пулчё. Эпир вара темёнле шуйттансем çинчен лёпёртететпёр.

— Йăнăшатăн, Маре. Шуйттансем мар вёсем, урăх галактикăран килнёскерсем. Шутланă пек хăрушах та мар-тăр олгузсем. Чиртен сыватма та шанăç пур. Халлёхе пирёнсёр пуçне никам та пёлмест олгузсем çинчен. Пирён вёсене пулăшмаллах, — хирёçлерё Дима.

— Çёр айнех анмăпăр эпир. Комиссар вилтăприйён вăрттăнлăхне вара тёпчесе пёлмеллех, — пурте хăйне тинкернине туйса явапларё Андрей. – Атьăр, паян лайăх хатёрленер, ыран ирех çула тухăпăр. Пухăнатпăр.

Çитённисемшён ачасен хăтланăвё кулăшла е ăнланмаллах та мар-и, тен. Çăмăлттайсем тесе вăрçакан та тупăнё. Мён тăвăн, ачасем аслисенчен хăш-пёр енёпе уйрăларах тăраççё çав. Вёсем нумай чухне пёлменнине те пёлнё пек пулаççё. Çитённисемшён ту çўллёш

туйӑнакан йывӑрлӑхсем те вӗсемшӗн ача вӑййин курӑнаҫҫӗ. Чун-чӗрипе те хытса ҫитмен-ха ҫамрӑк халӑх. Ҫапӑҫса кайнӑ тантӑшӗпе те самантрах мирлешме пултараҫҫӗ. Ҫын инкекне те чун ҫывӑхне илеҫҫӗ пӗчӗк-кисем. Усал ачасем те тӗл пулаҫҫӗ, паллах. Анчах сӑмах вӗсем пирки пымасть. Юрӗ, ҫӑвар тутине сая яриччен туссем патнех таврӑнар. Вӗсен тӗлӗнтермӗшӗсем пуҫланаҫҫӗ кӑна-ха. Ҫӗнтерӳсем те, ҫухатусем те йӑлтах малта.





## *Улттăмĕш сыпăк. ПИРВАЙХИ ЧĂРМАВСЕМ*

Мыскараллă фильмри пекех,Андрей пĕчченех хăпарать ту хысакĕ тăррине. Çӳле çитме инçе те мар ĕнтĕ. Сасартăк таçтан çăмламас, мăйракаллă, хӳреллĕ хăрушă чĕрчун сиксе тухрĕ. Аллисемпе хăлаçланать-хăлаçланать те хăйне вăрăм хӳринчен карт туртать. Кĕтмен çĕртенех ахăлтатма пикенет. Ян-ян-ян янăрать, кĕмсĕртетет ту хушăкĕ. Ура айĕнчи чулсем чĕтренеççĕ. Сулăна-сулăна каять Андрей. Ак ĕнтĕ ӳкет, ӳкет, ӳкет... Хăлхара çил шăхăрать. Хĕç пек çивĕчĕ чул катрамĕсем çывăхрах, çывăхрах. А-а-а-а! кăшкăрса ярать арçын ача. Сив тар ăшне путнăскер, шартах вăранать. Фу-у! Аслăк çинче иккен. Сăмсана утă шăрши кăтăклать. Хĕвел тухса сарăлнă. Чăрсăр пайăркисем аслăк хăмисем витĕр хуçăлса кĕреççĕ те куçа йĕплеççĕ. Чикмек тăрăх вăр-вар шуса çĕре анчĕ ача. Сада сиксе тухрĕ. Пуçне пичкери лĕпленнĕ шыва

чиксе кăларсан тин уçăлса çитрĕ.

Ши-ши-ши-и-и! шăхăрчĕç урамран. Карта урлă Гриньăн лапсăркка пуçĕ курăнчĕ:

— Хатĕр-и эс?

— Халех. — Андрей пӳрте чупса кĕчĕ. Каçах майласа хунă кутамккине йăтса урамалла вирхĕнчĕ. — Мăнакка, мана ан çухат. Похода каятпăр! — кăшкăрса хăварчĕ пахчари аккăшне.

Рахимсăр пуçне пурте пуçтарăннă иккен ачасем. Рахимсен килĕ умĕнче янрашса тăракан хĕрарăма аякранах асăрхарĕç.

— Тур çырлах. Шурăмпуç çути килнĕ-килмен алăка çĕмĕреççĕ вĕт. Похода каяççĕ имĕш. Вилĕме хирĕç пуçтарăннă мурсем. Пурăнса йăлăхтарчĕ-и? Шуйттан курас килет-ха апла? Ниçта та ямастăп Рахима. Ашшĕ пĕтни те çитĕ. Каларăм ăна та: «Ан çыхлан шуйттансемпе», — терĕм. Итлемерĕ. Халь тата ывăлсăр юлмалла-и? — ӳлеме пуçларĕ хайхи.

Ачасем йăлтах ăнланчĕç: ним те тăваймăн, Рахимсăрах çула тухма тивет.

Çавах ăна ял хĕрринче, хăйсем ялан пуçтарăнакан лапсăркка йывăç айĕнче кăштах кĕтсе пăхма шутларĕç. Хырăмĕсем те хыр тăррине хăпарчĕç — çук та çук юлташĕ.

Тепĕр сехет иртрĕ. Юлашкинчен Давидпа Надьăна яла яма йышăнчĕç. Разведчиксем часах таврăнчĕç. Амăшĕ Рахима питĕрсех лартнă иккен.

Тата кăштах кĕтес терĕç. Сехет ытла иртрĕ.

— Рахим килет, — кăшкăрса ячĕ сасартăк Гриня.

Чăн та, ял хĕрринче çын кĕлетки мĕлтлетни курăнать. Чупса çитрĕ тусĕсем патне. Тĕлĕнсех кайрĕç: çара уран, кĕпи çурăлнă, пичĕ-куçĕ тусанлă. Чикан ачи тейĕн.

— Ух, — сывлăш çавăрса ячĕ Рахим. — Аран тухса тартăм.

— Чăланта шăшисемпе çапăçман-тăр эс? — кулкаларĕ Дима.

— Ăхă, çапăçан унта. Аннене пĕлетĕр ĕнтĕ. Тӳрех

тревога çĕклерĕ вĕт. Чăланах хупса хучĕ. Кăштахран кăларĕ-ха тесе шутланăччĕ. Кăларать сана, асту. Чăлан урайне сӳтсех тухса тартăм.

— Апла пулсан вăхăта сая ярар мар. Айшагуль, кутамккуна Рахима пар, çывăрмалли миххе те. Вăл нимсĕрех, сана йывăр пулĕ. Ху вĕренсемпе кĕреçесене ил. Вăрмана çитиччен çак варакпа кайăпăр, ачасем, ун урлă тухсан хирпе, вилтăпри патĕнчи тĕмсем патне çитиччен. Çула лайăх пĕлетĕп эпĕ. Виçĕ çухрăмран ытла пулмасть, — хушусем пама пуçларĕ Дима.

Кутамккине йĕркеллĕрех майлаштарса вăл хулпуççийĕнчен хутаçа чикнĕ пăшалне çакрĕ, çирĕппĕн пусса малалла утса кайрĕ. Чылаях утрĕç вĕсем çапла. Часах тĕмсем патне çитрĕç.

Шăкăлтатса пынă чух самай вăрăм çул та кĕскелет. Палăк патĕнче нимĕнле улшăну та сисĕнмерĕ.

— Ăçта чавма пуçлăпăр? — пăшăлтатса ыйтрĕ Рахим.

Тусĕсем хавассăн ахăлтатса ячĕç:

— Хăранипе сассу çĕтрĕ-им?

— Мĕнрен шикленмелле?— Дима çитĕннĕ çынла ывăç тупанĕсене сурса йĕпетрĕ те кĕреçе тытрĕ. Çатăрт туса касăлчĕ çерем. Андрей юнашар тăчĕ.



## *Çиччĕмĕш сыпăк.* ТУ ХĂВĂЛĔ

Пĕрне-пĕри чăрмантарас мар тесе шăтăка иккĕншерĕн чавма палăртрĕç ачасем. Димăпа Андрей кĕреçесем тытрĕç. Гриняпа Давид вĕсем кăларнă тăпрана аякалла куçарма пуçларĕç. Ыттисем ырă сăмахпа хавалантарса тăчĕç чавакансене. Вăхăт нумай та иртмерĕ, çур метра яхăн чаврĕç те вĕсем. Хăй ĕçне куçпа виççе илнĕ хыççăн Андрей шăтăкран тухрĕ.

— Эх, ывăнтăм та, — терĕ вăл, тарне алтутрипе шăлса типĕтнĕ май. Унтан Димăна шăтăкран тухма пулăшрĕ.

Гриняпа Давид вӗсен ырӑнне йышӑнчӗҫ, кӗске вӑхӑтра шӑтӑка икӗ кӗреҫе тарӑнлатрӗҫ.

Андрей каллех шӑтӑка сикесшӗнччӗ, хӗрсем тытса чарчӗҫ.

— Пӗрер кӗреҫе те пулин эпир те чавар-ха эппин, аван мар вӗт капла. Нимӗнпе те кая мар-ҫке эпир сирӗнтен. Айшагулӗн, авӑ, волейболла выляссипе ҫамрӑксен пӗрремӗш разрячӗ пур. Маре — питӗ лайӑх гимнастка. Эпӗ хам та никама та маххӑ парас ҫук. Пӗртан ӗҫлес пулать пурин те, — терӗ Надя, шӑтӑкри Гриняна улӑштарса. Рахим унпа юнашар тӑчӗ. Кӑштахран вӗсен вырӑнне Марепе Айшагуль йышӑнчӗҫ. Вӗсем хыҫҫӑн шӑтӑкра Димӑпа Гриня ӗҫлерӗҫ. Андрей вӑл вӑхӑтра Давидпа пӗрле тавралӑха тӗпчеме кайнӑччӗ. Вӗсем таврӑннӑ ҫӗре шӑтӑк икӗ метртан та тарӑнрахчӗ ӗнтӗ.

Димӑпа Гриняна тухма пулӑшса Андрей вӗсем вырӑнне сикрӗ. Ҫавӑнтах ура айӗнче ҫӗр чӗтренсе илнине туйрӗ.

— Асӑрхан, Давид, ан сик. Ҫӗр чӗтренет кунта. Аялта пушӑ вырӑн ахӑр. Таҫта ҫӗр тӗпне анса каяс марччӗ... Вӗрен парӑр-ха. Пӗчченшерӗн, вӗренпе ҫыхӑнса чавас пулать кунта, — терӗ вӑл.

Вӗренпе ҫыхӑнса ача тепӗр кӗреҫе чаврӗ. Ҫӳлтисем вӑл чавнӑ тӑпрана витрепе кӑларса тӑчӗҫ. Анчах та тепӗр кӗреҫерен те нимӗн патне те чавса тухаймарӗ-ха ача. Аптранипе урипе тапса пӑхрӗ. Нимӗн те ҫук. Урӑх вырӑна куҫса вӑл икӗ урипе те сиксе илчӗ. Ҫавӑнтах хӑй аялалла шуса аннине туйрӗ.

Ытла тарӑнах та пулмарӗ иккен вӑл анса кайнӑ шӑтӑк. Пӗр метра яхӑн ҫеҫ анса кайса ҫӳлтен тӑкӑннӑ тӑпра ҫине ӳкрӗ вӑл. Тӗттӗмрен ҫӑмламас алӑ тухса хӑйне ярса илесрен хӑраса минут пек хускалмасӑр ларчӗ. Анчах та нимӗн хӑрушши те пулса иртмерӗ. Таврашӗпех тӗттӗм хупӑрласа тӑчӗ ӑна, ҫиелтен ҫеҫ, вӑл ӳкнӗ шӑтӑкран, анса пыракан хӗвелӗн вӑйсӑр ҫутисем сӑрхӑнчӗҫ.

Ӑна ҫыхса хунӑ вӗрентен ҫине-ҫине турткаларӗҫ, юлташӗсем пӑшӑрханаҫҫӗ ӗнтӗ. Унтан ҫӳлти пӗчӗк шӑтӑка

Дима пусĕ хупларĕ. Хайсем чавнă шăтăк тĕпне анса тăнă иккен тусĕ. Чавнă тĕпĕн пĕр пайĕ анчах ишĕлсе annă-çке.

— Мĕскер пулчĕ, чĕрĕ-и эсĕ унта? — ыйтрĕ Дима, тĕттĕмре мĕн те пулин асăрхас тесе аялалла тинкерсе.

— Чĕрĕ. Мĕнех пултăр мана. Метр çӳллĕшĕнчен çеç, тăпра çине персе антăм вĕт. Телей пулнă пирĕн. Шăпах çакăнта чавнăран. Метр айккинерех кайсан виçĕ метртан аялалла, чул çине вирхĕнмелле пулатчĕ. Комиссар тахçан чавса пăхнă вырăна лекрĕмĕр тем тесен те. Ту хăвăлĕн хĕрри ку, темле туннель пуçланать кунтан. Шăпах комиссар асăнса хăварнă ту хăвăлĕ пулма кирлĕ, — юлташĕ çывăхран Андрейĕн хăрани пĕтĕмпех иртсе кайрĕ. Çăмăллăн ура çине çĕкленчĕ вăл, тусĕсем веренрен туртса пулăшса тăнипе аванах çӳле хăпарса тăчĕ.

Хăвăрт тĕттĕмленсе пынăран ту хăвăлне тĕпчессине ырана хăварма калаçса татăлчĕç ачасем. Вĕтлĕхре темиçе тĕм касса туратсем илсе килчĕç, тин чавнă шăтăка хупларĕç. Хăрăк турат пуçтарса кăвайт чĕртрĕç, апат пĕçерсе çирĕç. Палатка лартрĕç. Кăвайт умĕнче черетпе хураллама калаçса татăлчĕç. Андрее ир енне хураллама тиврĕ. Ирхи сивĕ чĕтреме ертрĕ ачана, ăшăнас тесе кăвайт умне пырса ларчĕ вăл. Темиçе турат пăрахрĕ унта. Сехет пек тĕлĕрсе те илнĕ ахăр вут умĕнче ăшăнса. Ку вăхăтра таврара пĕтĕмпех çутăлса çитнĕ. Сӳнме тытăннă кăвайтри кăвара пăлхатса ярса типĕ туратсем пăрахрĕ вăл унта, уçланкă тăрăх утса çаврăнчĕ. Пурте йĕркеллех, нимĕн те улшăнман çĕр каçа.

Ирхи апат çисенех ту хăвалне тĕпчеме тытăнас, терĕç ачасем. Çӳле хăйсенчен иккĕшне хăварма калаçса татăлчĕç.

— Авалхи грексен мифологийĕнче Тесей çинчен калакан халап пур. Çĕр айĕнчин кукăр-макăр лабиринтран вăл Ариадна ятлă хĕр панă çип çăмхине пула хăтăлса тухнă, имĕш. Эпир çăмха вырăнне пулă тытмалли лескапа усă курăпăр. Акă, палатка юпинчен çыхса хуратпăр

та пĕр вĕçне, çăмхана сӳтсе пыратпăр. Леска тĕркемĕсем темиçе те пур манăн. Çитмелле. Каялла килнĕ чухне аташса каймăпăр капла, — терĕ Дима, лескан самай пысăк тĕремне сӳтме пуçласа.

Çӳле юлакана палăртас тĕлĕшпе чылай пысăк пăтăрмах сиксе тухрĕ. Никам та юлма килĕшесшĕн мар. Пурте çĕр айне, хăрушлăхсене хирĕç каясшăн. Кашнийĕнех витĕмлĕ сăлтав пур иккен. Рахим, сăмахран, палăк умĕнче юлма хăрани пирки уççăн каларĕ. Ту хăвăлĕнче, юлташĕсемпе пĕрле, ун шучĕпе, пачах та хăрушă мар иккен. Унпа хĕрачасем те килĕшрĕç.

— Иккĕн çеç, уçланкăра, виле пытарнă çĕрте юлмалла-и? Çук. Тата кунта миçе кун кĕтмелли те паллă мар. Çĕрле хăранипе вилсех кайăп эпĕ кунта, — терĕ Маре, çивĕтне чечек хурса çивĕтленĕ май.

— Манăн малтах пулмалла, мĕншĕн тесен Гриняна асăрхаса тăмалла. Пăхса тăмасан мĕн те пулин хăтланма пултарать вăл, — сăлтав тупрĕ Надя.

— Хирĕçер мар, ачасем. Çӳлте те камăн та пулин юлмаллах, тесе шутлатăп эпĕ. Çук, ман шутпа чи йывăр çĕрте пулмалла яланах. Ыттисем килĕшменни шăпах чи йывăр вырăн ĕнтĕ. Çавăнпа кунта юлатăп эпĕ. Хăранипе мар, паллах, мĕншĕн тесен кунта юлма хăрушăрах тесе хăвăр каларăр-çке, — сасартăк татăклă шухăш тытрĕ Андрей.

Çавăнтах Рахим, тин çеç отряд пуçĕнче пыма ăнтăлаканскер, шухăшне улăштарчĕ.

— Эпĕ те юлатăп апла. Санпа, Андрей, никамран та хăрамастăп. Ăнăçуллă эсĕ. Ту хăвăлне чи малтан анса кайрăн — нимĕн те пулса иртмерĕ санпа, — терĕ вăл.

— Хатĕрленӳ питĕ сахал вăхăт илчĕ. Шăтăк патне чи малтан Дима пычĕ. Васкамасăр кедисен кантрисене тĕрĕслерĕ вăл, аллине хыçала ярса кутамккине тытса пăхрĕ, хулпуççи урлă çакса янă пăшалне тӳрлетрĕ те шăтăка сикрĕ. Ун хыççăн, аллинчи пĕчĕк пурттине малалла кăнтарса Гриня васкарĕ. Аллине котелок аврине

çaклатса Надя вӗрене аллисемпе çатӑрласа тытрӗ, акробатка евӗр сиксе илсе тӗттӗмре çухалчӗ.

— Халлӗхе, ачасем. Ан хуйхӑрӑр, пирвайхи олгуз пуçнех миххе хурса сире парне вырӑнне илсе килсе парӑп эпӗ, — аллинчи сенӗкӗпе сулса сывпуллашрӗ юлакансемпе Маре.

Айшагуль, çӑмха сӳте-сӳте, Андрей патне пычӗ.

— Тен, çавах та эсӗ каятӑн. Эпӗ юлӑп. Унта çавах усси сахал пулӗ манран, вӑйсӑрскертен, — терӗ вӑл. Анчах та юлташӗ каялла чакма шутламаннине кура куçӗсене тартрӗ. — Мӗн те пулин сиксе тухас пулсан çийӗнчех чупса килӗп сирӗн пата пулӑшу ыйтма. Кунӗпе, çӗрӗпе пӗр чарӑнмасӑр чупӑп, çавах çитӗп, — каласа хучӗ вӑл юлашкинчен хӗрӳленсе.

— Тӗрӗс, эсир хатӗр тӑрӑр, пулӑшу кирлӗ пулма пултарать, — калаçӑва хутшӑнчӗ Давид, хӗрачана шӑтӑка анма пулӑшнӑ май. Часах вӗсем те курӑнми пулчӗç. Уçланкӑра Рахимпа Андрей иккӗшех юлчӗç.



## *Саккăрмĕш сыпăк.*
## *АББАС ХУСЕЙНОВ ЙĔРĔПЕ*

... Ачасем самантлăха чарăнчĕç. Комиссар япалисем хушшинче тупнă мăйракасенчен пĕрне Дима мăйне çакрĕ. Теприне Андрейпе Рахима парса хăварнăччĕ. Мăйракаран газ çуламĕ тĕслĕ кăвакрах çутă сăрхăнать, малти çула аванах палăртать. Ачасен виçĕ электрохунар та пур.

Димăна командир пулма шанчĕç. Çапла килĕшсе татăлчĕç: Дима пăшалпа малта пырать. Сенĕкпе хĕçпăшалланнă Маре ун хыççăн, Давид пурăпа стена çине стрелкăсем тăвĕ (аташса каясран). Çак тĕллевпех Надя вăлта çиппи карса пырĕ. Айшагуль — компас хуçи. Хăвăл карттине те вăлах ӳкерĕ. Чи хыçалта — пуртă йăтнă Гриня.

Çула сăнасах утмалла. Хăвăл юпленсе кайма та пултарать.

Ку шухăш часах чăна тухрĕ. Çирĕм минут иртсенех умри çул икке пайланчĕ.

— Хăшĕнпе кайăпăр? — ыйтрĕ Давид.

— Тӳрĕ çултан пăрăнмăпăр. Давид, вăрăм йĕр туртса паллă ту, — хушрĕ Дима.

Командир шиксĕрлĕхĕ ыттисене те куçрĕ. Çавна май малалла кайнăçемĕн çул йывăç тымарĕ пекех юпленсе пыни никама та хăратмарĕ.

Виçĕ хутчен ларсах канчĕç. Ăшра пурте çул вĕçленессе кĕтрĕç. Вăл ак-ак пĕтмелле. Анчах вĕçĕ-хĕрри куранмарĕха. Хăвăл шалтан-шала астарса пычĕ ачасене. Ăна такам касса якатса тунă тейĕн. Анлăшĕ те, çӳллĕшĕ те пĕчĕкленни-пысăкланни сисĕнмест. Çавах çак тĕлĕнтермĕш коридора çын алли касса туманах пуль.

Утса ĕшеннĕçемĕн вĕççĕр çул шиклентере пуçларĕ. Ачасем черетлĕ кану хыççăн тĕп çул айккинчи коридора кĕрсе пăхма шутларĕç. Питĕ кĕске пулчĕ вăл. Çĕр аллă метрсем кайсан çаврака пысăк зала тухрĕç.

— Космос карапĕнчи пекех. Пăхăр-ха, стена çинче чӳрече, алăк йĕрĕсем те палăраççĕ. Вĕсем халь-халь ирĕлсе çухалассăн туйăнаççĕ, — тĕлĕнчĕ Давид.

— Темĕн, олгузсен карапех-ши ку? Комиссар çырнă тăрăх, вăл питĕ пысăк. Тата çав тери тусанлă кунта. Сахалтан пĕр 300-400 çул никам ура ярса пусман ку пӳлĕме, — иккĕленчĕ Дима.

Кайсан-кайсан тепĕр пысăк зала тухрĕç. Унтан татах — тепĕр туннеле. Пĕр сехет утрĕç, иккĕ... Нихăшĕ те хăй хумханнине палăртасшăн мар. Пырсан-пырсан çул кĕтмен çĕртен аялалла выртрĕ. Хальхинче Гриня чăтаймарĕ:

— Çĕр тĕпнех илсе каять-тĕр. Унта вара шуйттан та, тем те курăпăр. Каялла çаврăнмалла.

Чĕнекен тупăнмарĕ. Татах утрĕç чылаях, çутă минералсемпе витĕннĕ стена патне пырса тухрĕç.

— Вăт халь чăнах та каялла çаврăнма тивет, — терĕ Дима.

— Ан васка, — Давид стена патне пычĕ, урине тапрĕ.

— Ун хыçĕнче пушă, ачасем, — терĕ вăл. Унтан чĕркуçленсе ларчĕ, аялти пĕчĕк шăтăкран кĕрсе çухалчĕ.

Васкаса чулсене сирсе шăтăка пысăклатрĕç ачасем, ун витĕр тухса тепĕр пӳлĕме лекрĕç. Унтан кукăр-макăр туннельпе аялалла татах чылай утрĕç.

Сасартăк малта çутă куранчĕ. Ачасем уттине хăвăртлатрĕç. Кунашкал пысăк зала кĕменччĕ-ха. Куçкĕски пек

ялкăшакан урайĕнчен тапса тăракан вăйлă çутă куçа йăмăхтарать.

— Пăр, куратăр-и, пăр? Епле ялкăшать! — малалла тапса сикрĕ Гриня.

— Чарăн! Чарăн! — кăшкăрчĕ Айшагуль.

Анчах кая юлчĕ. Гриня пăр çине икĕ урипех кĕрсе кайрĕ. Çавăнтах йăлтăркка шĕвек арçын ачана кăкăр таранах эрешмен картилле яваласа илчĕ.

— А-а-а! — пулăшу ыйтса кăшкăрчĕ Гриня.

Чупса çитнĕ Давидпа Дима аллисенчен çатăрласа тытрĕç. Туртса кăларчĕç. Ак тĕнче: Гриня çинчи шĕвек тем хушăра ирĕлсе çухалчĕ. Тумтирĕ те тип-типех. Çапах хăй сиксе чĕтрет.

Айшагуль шĕвек ăшне тутăрне чиксе пăхрĕ. Туртса кăларчĕ — йĕпенмен.

Сехри хăпнă Гриня аран сăмах çыхкалать: «Ах, мĕнле хăрушă шыв. Сивви шăмма витерет. Кăкăра хĕссе лартрĕ. Вилетĕпех пуль терĕм. Шурлăх пек çăтать-çăтать шалалла. Унтан сасартăк питĕ çăмăл, ырă пулса кайрĕ. Вĕçсе кайрăм пек. Сире, ачасем, куратăп, анчах темшĕн питĕ пĕчĕккĕ пек эсир аялта. Унтан эсир çухалтăр, эпĕ чĕтренсе тăракан вырăнта тăратăп пек. Малта йĕри-тавра çуталса тăракан кăвак пăнчă. Ун патне пырасшăнччĕ, пур те çухалчĕ, кунта сирĕн пата пырса тухрăм...»

Кӳллĕн вĕçĕ-хĕрри те палăрмасть. Иртсе кайма та çук. Каялла çаврăнма тиврĕ.

— Олгузсене пĕрех тупатпăр. Çутă пур пирĕн. Çимелли те кăштах юлнă, — хавхалантарчĕ командир.

Татах вĕç-хĕрсĕр лабиринт юпписем. Вĕсен шут-хисепне çухатрĕç ĕнтĕ шыравçăсем. Пырсан-пырсан çĕр айĕнчен фонтанла сирпĕнекен шыв тĕлне тухрĕç. Шывĕ тĕттĕм коридорпа юхса пĕчĕк кӳлле тухать. Кӳлĕ варринче шыв çаврăнса тăрать. Тĕпсĕр авăр ахăр кунта. Ку авăр урлă шыв таçта аяла анса каять пулмалла.

Дима хăй çемçе япала çине пуснине сисрĕ. Пĕшкĕнчĕ те аллине çăлтăрлă салтак çĕлĕкĕ çакланчĕ. Мĕнле, ăç-

тан, хăçан лекнĕ вăл кунта? Çавăркаласан-çавăркаласан шал енне пысăк саспаллисемпе çырнине асăрхрĕç: «Аббас Хусейнов. 4359832 №».

— Ара, Рахим ашшĕн çĕлĕкĕ мар-и ку? — йĕнчесе тăчĕç пурте.

— Итлĕр-ха, тусăмсем, — хумханнине пытараймарĕ Дима. — Эпир ту хысакĕн варринче, Каланчара пулас. Ахăртнех, çĕр айĕнчи шыв пирĕн ял çывăхĕнчи юханшыва юхса тухать. Рахим ашшĕн виллине шăпах юханшыв хĕрринче тупнă. Апла-тăк, вăл тăвата çул каялла çав вырăнта пулнă, олгузсене те курнах. Анчах кам ăна вĕлерсе шыва пăрахнă-ха?

Хурав тупаймарĕç ачасем.

Фонтан çывăхĕнче апатланса пăртак вăй пухсан малалла тапранчĕç. Коридорта тусан та сахалланчĕ. Çын çӳрекен çĕрте çеç çапла пулма пултарать. Çакна çирĕплетнĕнех малта пăшал сассисем илтĕнсе кайрĕç. Нумай йĕнчесе тăмарĕ хастар ушкăн: хунарĕсене сӳнтерчĕç, мăйракана çĕтĕкпе чĕркерĕç. Кашниех хĕç-пăшалне çапăçăва хатĕрлерĕ...



## *Тăххăрмĕш сыпăк.*
## *АТАШСА КАЙНĂСКЕРСЕМ*

Çур кун кĕтсе ларчĕç ачасем юлташĕсем таврăнасса. Вĕсем нумайлăха çухаласса ĕненес килмерĕ вĕсен.

— Нимĕн те тупаймасан та таврăнмалла. Тĕттĕмре, умра мĕн кĕтнине пĕлмен çĕрте виç-тăвата сехет тăрасси те паттăрлăх вĕт, — терĕ Рахим.

— Çук, Дима вунă сехетрен кая мар кĕтме каланăччĕ «Пилĕк сехет малалла каятпăрах. Нимĕн те тупаймасан каялла çаврăнатпăр, каçа çитĕпĕр», тенĕччĕ. Вăхăт çитмен-ха апла пулсан, — хуравларĕ Андрей.

— Тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленмелле вĕсене. Çур кун пиçсе выртатпăр кунта хĕвел çинче нимĕн тумасăр. Тен, киле кайса тимĕр чикмек илсе килес манăн? Шăтăка тăрататпăр та, ачасене улăхма аванрах пулать. Капла хамăра та йывăра килĕ — вĕренпе туртса кăлармалла пулать-çке, — хĕрӳленсе калаçа пуçларĕ Рахим.

— Аннӳ каллех чăлана питĕрсе хурсан?

— Питĕрмест. Ĕçре вăл халь. Лăпланчĕ те пулĕ ахăртнех. Малтан çеç çапла кăра вăл, кайран йăвашланать. Атте вилнĕ хыççăн йăлтах улшăнса кайрĕ. Ним çук çĕртен кăшкăрашма тытăнать. Хăй питĕ лайăх çын вăл. Юрĕ, эпĕ чупатăп эппин. Киле çитсен асаннене походран пурте таврăнчĕç, халĕ выляма каятăп тесе калатăп. Ан пăшăрхантăр анне.

Самантран Рахим тĕмсем хушшинче çухалчĕ. Пĕччен юлсан Андрей сехет ытла хĕвел çинче хĕртĕнсе выртрĕ, унтан шăтăк патне çывхарчĕ. Чылайччен аялалла пăхса итлесе тăчĕ, нимĕн сас та çук. Каç пулман-ха, ачасен таврăнма вăхăт çитмен. Дима çапла çын-çке — тĕллевне пурнăçламасăр каялла таврăнмасть. Çапла вара ачасем ыран çеç çитме те пултараççĕ.

Ку вăхăтра такам та пырса тухĕ уçланка, шăтăка курăнми тăвас пулать, — пырса тухрĕ шухăш ача пуçне. Туратсем илсе килсе вăл шăтака вĕсемпе витсе курăнмалла мар турĕ. Самаях ывăнчĕ, палаткăна кĕрсе выртрĕ те хăй сисмесĕрех çывăрса кайрĕ.

Сивĕпе вăранса кайрĕ вăл. Палатка çурăкĕсенчен ирхи хĕвел пайăркисем сăрхăнса кĕреççĕ. «Çывăрса юлтăм», — вĕçсе иртрĕ шухăш пуçра. Андрей пуля пек палаткăран тухса вирхĕнчĕ. Уçланка пăхса çаврăнчĕ, туратсене сирсе шăтăка тĕпчерĕ. Нимĕн улшăнусем те çук.

«Ăçта-ха Рахим? Мĕншĕн килмен? Ачасене мĕскер

пулнă-ха тата? — пăшăрханчĕ ача. Палаткăран малтан хатĕрленĕ типĕ туратсем илсе тухрĕ, кăвайт чĕртсе ячĕ. Одеялпа чĕркенсе ларса хăй сисмесĕрех каллех тĕлĕрсе кайрĕ. Мотор кĕрленипе вăранчĕ вăл. Рахим велохочĕпе уçланка кĕрлеттерсе кĕрсе палатка умĕнче чарăнчĕ. Юлташĕ патне пырса аллине унăн хулпуççийĕ çине хучĕ.

— Каçар тархасшăн. Киле çитрĕм, анне ĕçе кайман, йĕрсе ларать. Лăплантарма тиврĕ вара. Хăвах пĕлетĕн, епле тухса кайăн ун пек чухне? Каçарĕ терĕм сана, ачасем килессе те шаннăччĕ. Паллах, сана çăмăл килмен кунта пĕччене, мана та ăнлан. Каçа хирĕç тухса кайсан пачах хавшаса каятчĕ анне. Ахаль те чирлĕ-çке... Эпĕ хыввăннине курсан çеç тек ниçта та кайманнине ĕненчĕ... Эсĕ выçă ĕнтĕ. Кăлпасси, сĕт, çăкăр илсе килтĕм. Çи.

— Тавтапуç, хырăм чăнах та выçса çитнĕччĕ. Килте çывăрнăшăн ан пăшăрхан, тĕрĕс тунă. Эпĕ хам та çывăрса кайнă. Çĕр мĕнле иртнине сисмен те.

Андрей апатланнă хыççăн ачасем шăтăка Рахим илсе килнĕ чикмеке антарса лартрĕç, ту хăвăлне кăштах тĕпчерĕç.

— Андрей, чĕре вырăнта мар манăн. Мĕншĕн халĕ те таврăнмаççĕ-ха? — пăшăрханчĕ Рахим.

— Тĕрĕс. Эпĕ те шутлатăп çавăн пирки. Çирĕм пилĕк сехет çĕр айĕнче ĕнтĕ вĕсем. Нимĕн те сиксе ан тухтăрччĕ.

— Тен, шырама кайăпăр вĕсене? Вăлта çиппи çул кăтартса пырĕ. Тен велоходпа кайăпăр шырама?

— Вăт çын. Аташатăн-и? Велохода шăтăка епле антарăн-ха?

— Пайăн-пайăн. Кăткăс япала мар вăл. Питĕ хăвăрт салатса çĕнĕрен пуçтарма пулать манăн машинана.

Чăнах та, çур сехетренех палăртнине пурнăçларĕç ачасем, велохода аяла антарчĕç. Андрей чул хысакĕ çумне олгуз мăйракине çирĕплетсе хучĕ. Унăн çутипе велохода пуçтарма меллĕ пулчĕ.

Андрей çӳле хăпарчĕ, палаткăна пăсса шăтăка антарчĕ.

— Епле, каятпăр-и, — терĕ вăл, шăтăка туратсемпе хуплама тăрăшакан тусне.

— Ан васка, тĕмсем хушшинче мĕн шавлать çав унта? — чарчĕ Рахим.

— Йытăсем вĕреççĕ тем? Такам пирĕн паталла чупать пулас.

Хав-хав-хав! — çывăхрах ĕнтĕ йытă сасси. Кĕррĕс-кĕррĕс! Пăшал сассисем таврана çураççĕ.

— Шпиона хăвалаççĕ пулас. Погранични... — сăмахне вĕçлеймерĕ Рахим.

Çывăхри тĕмсене шатăртаттарса уçланка тăрмаланчăк çӳçлĕ арçын чупса тухрĕ. Пуçĕнчи хура шĕлепки чалăшнă. пысăк кутамкки самаях пусать-тĕр: хашкаса, йывăррăн сывлать. Ăçта тармалла! Самантлăха çеç йĕнчесе тăчĕ вăл, анчах хыçран хăвалакан йытăшăн ку та çителĕклĕ пулчĕ. Пăру пек тĕреклĕскер, анчăк тăшмана куç хупса иличчен çĕре çапса ӳкерчĕ. Çын та парăнмарĕ. Кĕррĕс-кĕррĕс! — çине-çине янăрарĕ пăшал сасси. Тин кăна çыртса тимĕр татма пултарас йытă асаплăн нăйкăшса авкаланма пикенчĕ.

Çын хашăлтатса çĕкленчĕ. Урнă вăкăрăнни пек юнпа тулнă куçĕсем Рахимпа Андрее йĕплерĕç. Пистолетăн вилĕм сирпĕтме хатĕр çăварĕ ачасене хыпаларĕ.

— Андрей, сик шăтăка!

Тӳмп турĕç туссем шăтăк тĕпне. Тавах Рахима, машинине хăвăрт хускатма пултарчĕ. Велоход фарипе сĕмлĕхе çурса, çиçĕмле хăвăртлăхпа çĕр хăвăлне кĕрсе çухалчĕ.

— Майĕпенре-ех, çаврăнса ӳкетпĕр! — мотор шавне çĕнтересле кăшкăрчĕ Андрей.

Вĕлт те вĕлт, вĕлт те вĕлт вĕлтлетсе юлаççĕ лабиринт юппisem.

— Малта çул çу-ук! — хăрушлăха курса татах асăрхаттарчĕ Андрей.

— Аха! — терĕ те Рахим, руле вăрт çеç суллахайри коридоралла пăрчĕ.

Чĕрри-и-ик туса илчĕç тормозсем. Андрей чутах сир-

пёнсе каятчӗ. Стена ҫумне тусӗсем карса кайнӑ леска фара ҫутинче мӗлтлетсе пычӗ-пычӗ те курӑнми пулчӗ.

— Ча-арӑн! Ӑҫта урӑм-сурӑм хӑвалан? — сехӗрленчӗ Андрей.

Рахим ӑна илтеймерӗ-ши, машина хӑвӑртлӑхне пушшех ӳстерчӗ. Вӗлт-вӗлт-вӗлт — малтанхинчен те хӑвӑртрах вӗлтлетеҫҫӗ ҫӗнӗ коридорсем, ӑнланмалла мар пӳлӗмсем.

Пӗрер сехет кайсан Рахим хӑвӑртлӑха чакарчӗ. Тӗмӗнле зала вӗҫтерсе тухсан машинӑна пачах чарчӗ.

— Ух, хӑрарӑм та, — ҫамки ҫинчи тарне ҫанӑ вӗҫпе сӑтӑркаларӗ хӑй.

Мотора сӳнтерчӗҫ. Ҫавна май фара та, юлашки хӗлхемне таврана ывӑтса, куҫне хупрӗ. Тӗттӗмӗн хура чаршавӗ йӑтӑнса анчӗ ачасем ҫине.

Хӑйсем мӗн тери пысӑк йӑнӑш туса хунине тин ӑнланчӗҫ туссем. Хунар та ҫук. Ҫутатакан мӑйрака та ҫӳлтех юлчӗ. Ҫӑкӑрсӑр, пӗр сыпкӑм шывсӑр инҫех каяймӑн. Каялла тухмалли ҫула тупайӗҫ-ши тата? Вӗсене те комиссар шӑпиех кӗтмест-ши? Ку шухӑшран шӑмӑсем те сӑрлатса илчӗҫ.

Пӗр-пӗрин ҫумне таянса нумайччен ларчӗҫ. Калаҫас килмерӗ. Мӗн каласси, шиклӗх хӑй ытамӗнчех тытрӗ-ха. Тӗттӗмрен ак-ак хӳреллӗ, ҫӑмламас, мӑйракаллӑ чӗрчунсем сиксе тухсан? Анчах ҫур сехет иртрӗ, пӗр сехет — вӑл-ку нимӗн те пулмарӗ. Хӑюлӑх тени те хуллен таврӑнчӗ.

Тем туса ывӑннӑн ыйхӑ килет. Пуҫсем ланк усӑнаҫҫӗ. Андрей хевте ҫитерсе ҫӗкленчӗ:

— Тӑр, Рахим, тӑр. Ҫул шырамалла. Тен, ачасене тӗл пулӑпӑр. Пӗрле ҫӑмӑлрах. Вӗсен пӑшал та пур.

Рахим машинине хускатма хӑтланчӗ. Куҫсем тӗттӗме хӑнӑхрӗҫ-ши: пӑртак ҫутӑрах пек. Андрей хыҫалалла ҫаврӑнчӗ те чутах кӑшкӑрса яратчӗ: коридор тӑрӑх йӑлтйӑлт туса ҫутӑ куҫать.

— Шпион, — пӑшӑлтатрӗ Андрей.

Рахимшăн ку та çителĕклĕ пулчĕ. Вăл çĕлен сăхса илнĕн шартах сикрĕ. Самантрах иккĕшĕ те машина çине siksе ларчĕç. У-у-у-ун! вăрăммăн уласа илчĕ те велоход, хăранă ту качакилле малалла ыткăнчĕ. Хыçра пăшал сасси кĕрлерĕ. Халиччен аванах çутă сапаланă фара лап сӳнчĕ. Ăна-кăна кĕтмен Рахим çухалсах кайрĕ. Велоход стенана пырса тăрăнчĕ. Андрей пĕр еннелле, Рахим тепĕр еннелле сирпĕнчĕç. Шăмшакĕ ыратнине пăхмасăрах Андрей çула хыпашлама пикенчĕ. Сылтăмра пушăлăх. Коридор пулма кирлĕ.

— Рахим?

Тусĕ ахлаткаласа çывхарчĕ. Андрей ăна юнашарти туннеле туртса кĕчĕ. Мĕлт-мĕлт-мĕлт... мĕлтлетсе çывхарать паçăрхи çутă. Хыçран килет, мур. Андрей ал айне лекнĕ чул катăкне ун еннелле вăркăнтарчĕ. Рахим та ярăнтарчĕ. Çутă урайне ӳкрĕ. Такам хаяррăн ятлаçса илчĕ. Вăй-вăй-вăй! вăйлатса иртрĕ темиçе пуля. Хыççăнах пăшал сассин ахрăмĕ килсе çапрĕ.

— Тăшмана çывхартма юрамасть. Унсăрăн пĕтетпĕр. Чулпа перер, Рахим.

Андрей, чул илме пĕшкĕннĕскер, аллине вăрăм тимĕр çакланнине туйрĕ. Пăшал? Сунар пăшалĕ? Патронташĕ те пур. Ăçтан кунта пăшал? Тен, (шутлама та хăрушă) Дима пăшалĕ? Ачасем вара... Пуçра вуншар ыйту çуралчĕ. Хуравĕ çеç тупăнмарĕ. Ун валли ĕнтĕ вăхăт та юлмарĕ.

Коридор вĕçĕнчи çутă тăнч çухалчĕ. Анчах такам чăштăртаттарса çывхарни уççăнах илтĕнет.

— Рахим, пăшалтан пеме пĕлетĕн-и?

— Пăшалтан? Ăçта-ха вăл? — йĕнчесе тăчĕ Рахим. — Пересси персе курнă-ха эпĕ. Аттен пăшал пулнă вĕт.

— Ме, тыт. Асту, тен, авăрланă та ăна.

Пăшал тупни Рахима та вăй хушрĕ. Вăл тĕллемесĕрех тĕттĕмелле шаплаттарчĕ. Кĕррĕс-кĕррĕс! хирĕç сас пачĕ тăшман та. Пульăсем суккăр пăванла пăрлатса пуç çийĕн иртрĕç. Янăраса çеç тăрать çĕр хăвăлĕ. Вилĕм шыракан тăхлан татăкĕсем тĕттĕм коридорти пăнтăх сывлăша çурса

вĕçеççĕ. Чан-чанк! — велохода шыраса тупрĕç иккĕшвиççĕш.

— Ах, шуйттан, пĕтерчĕ машинăна, — пульăсем хăйне лекнĕнех йынăшса ячĕ Рахим.

Тăшман пĕр вăхăт пемерĕ. Мĕн тумаллине шутлатьтĕр.

— Чакас пулать, Андрей.

Кукăр-макăр коридорпа самаях чупрĕç.

— Çитĕ. Çакăнта хӳтĕленĕпĕр, — пĕр кукăрта чарăнчĕ Андрей.

— Андрей, итле-ха, — тем пулчĕ Рахима. Сасси чĕтренсе тухрĕ. — Атте пăшалĕ ку. Акă, тытса пăх-ха, «Х» саспалли касса кăларнă приклад çине. Атте тăватă çул каялла çак пăшалпа кайнă. Олгузсем вĕлернĕ ăна. Олгузсем...

— Чăштăр-чăштăр, — илтĕнет сасă. Çиçĕмле çĕкленчĕç. Тĕттĕмре стенана пырса тăрăнасран та хăрамасăр малалла ыткăнчĕç. Темле зала сиксе тухрĕç. Варрине çитейрĕç-и, çук-и — таçтан вăйсăр çутă ӳкрĕ. Çавăнтах ура айĕнче çĕр чĕтренсе илчĕ. Хăйсем тĕпсĕрлĕхе ӳкнине çеç ăнланчĕç.



## *Вуннӑмӗш сыпӑк. ОЛГУЗСЕМ*

Нумай вӑхӑт ӳкмерӗҫ ачасем. Резина сетка вӗсене ҫӳлелле ыткӑнтарчӗ. Темиҫе хутчен ҫӗкле-ҫӗкле персен сӑпка пек хуллен-хуллен ярӑнтарма пуҫларӗ. Пӑртакран, вӑйӗ пӗтнӗн, тӑпах пулчӗ.

Йӗри-тавра йӑваш ҫутӑ хуҫаланать. Пысӑках мар пӳлӗме лекрӗҫ иккен. Маччаран ҫакса хунӑ сеткӑран пӳлӗм лайӑх курӑнать. Сетка хӗррине шуса ҫитнӗ Андрей ҫӗре тӑррӑс сикрӗ. Рахим та хыҫҫӑнах.

Пӳлӗмӗ пуш-пушӑ. Урайӗ, кавир сарнӑн, ҫемҫе.

— Рахим, олгузсем патне çакланмарăмăр-ши? Анчах хăйсем ăçта?

— Хăраççĕ-тĕр. Пăшал пуртан çулăхма шикленеççĕ. Пĕрре кĕрслеттерсен! — паттăрланчĕ Рахим.

— Çу-ук, Рахим, хуçисем хăраниех сисĕнмест-ха. Чĕтресе тăракансем эпир ӳксе саланасран сетка карсах хумĕччĕç. Тӳрех урайне шаплатнă пулсан шăмăсене те пуçтарса пĕтерейместĕмĕр.

Мачча çумĕнчи сетка силленсе илнĕнех туйăнчĕ. Пуçĕсене ялтах çĕклерĕç ачасем. Мĕн ку? Темле çын эрешмен картине лекнĕ шăна евĕр тапкаланать.

— Шпион, — тавçăрчĕ Рахим.

— Чĕрех?

Ĕхлеткелесе çĕре сиксе анчĕ хайхи. Аллинче пистолет ялтăртатрĕ.

Пăрахма-и, хăвăрт-хăвăрт, çине-çинех курока пусрĕ шпион. Анчах пистолет ним тусан та пемерĕ.

Çав самантра стенари курăнман алăк уçăлса кайрĕ, пӳлĕме икĕ тĕлĕнтермĕш (те çын темелле, те чĕрчун) кĕчĕç. Мăйракаллă, хӳреллĕ, хăлхисем ашакăннинчен пĕрре те кĕске мар. Кăвак йĕмсемпе, çав тĕслех курткăсем тăхăннă; хулпуççийĕсем çинче йăлтăркка çаврашкасем; урисенчи пушмакĕсем сенкер çутăпа çиçеççĕ.

Çакскерсем пĕр сас кăлармасăр «шпиона» çулса тытрĕç те таçталла танкăлтаттарчĕç. Хуçасем тухса кайсанах алăк вырăнĕ палăрми пулчĕ.

— Ăшалма илсе кайрĕç, — шӳтлеме хăтланчĕ Рахим. — Кусем салтаксем ĕнтĕ. Хуçисем сĕтел хушшинче шаритлесе килессе кĕтсе лараççĕ.

— Мĕн те пулин тумаллах. Унсăрăн, чăн та, çисе те ярĕç.

Ачасем стенасене хыпашласа тухрĕç — ниçта та алăк йĕрри çук.

Нумай иртрĕ-и вăхăт, сахал-ши — курăнман алăк татах пĕр сассăр уçăлчĕ. Хальхинче олгузсем (вĕсемех пул-

сан?!) тăваттăн кĕрсе тăчĕç. Малти кĕмĕл тумтирпе, умне пĕчĕк хура ещĕк çакнă. Кам-ши? Патша? Иккĕшĕ пӳлĕм варрине тухса пуç тайрĕç. Ултшар пӳрнеллĕ аллисемпе сулкаларĕç те, ак сана, таçтан икĕ çемçе пукан шăтса тухрĕ.

Хаклă тумтирлисем ларчĕç. Вăрăм мăйракалли пуçне çĕклерĕ те темĕн калама пикенчĕ. Сасси çемçе, илемлĕ, анчах ачасем пĕр сăмахне те ăнланаймарĕç. Çакна хуçасем тӳрех тавçăрчĕç. Пĕри маларах иртсе хура ещĕк авриине темиçе хутчен çавăрчĕ. Ачасем тĕлĕннипе айлатсах ячĕç. Вĕсен умĕнче чăн-чăн ватă çын. Вăрăм шурă сухаллă. Пичĕ тарăн çĕвĕклĕ. Куçĕсем çеç ачаннилле таса та çамрăк.

— Раççейрен-и? — кăмăллăн ыйтрĕ ватă.

— Аха, совет çыннисем эпир, — харăсах хуравларĕç туссем.

— Çаплах пуль терĕмĕр çав. Хăвăлти çапăçăва сăнасах тăтăмăр. Хăюллă ачасем эсир. Тăшманăра тытрăмăр ĕнтĕ. Сирĕншĕн те, пирĕншĕн те тăшман вăл. Ачасем, эсир Каланчаран мар-и?

— Шăпах çавăнтан, — тĕлĕннине пытараймарĕç Рахимпа Андрей. «Ку старик ăçтан пĕлет-ха Каланча çинчен?»

Иккĕленĕве сирме старик хăех пулăшрĕ.

— Унта çуралнă эпĕ. Тахçанах. Çĕр çинче мана Токубай Хусейнов тетчĕç. Утмăл çул каялла, вунулттăра чухнех лекрĕм çакăнта. Арăм, ватă анне... Эх, сывах-ши вĕсем халĕ — кам пĕлет. Çĕр çине тухăттăм — сăмах пани пĕтерет...

— Сывах, сывах мăнасанне! Пĕрмай сана кĕтет, мăнасатте! — хытă савăннипе Рахимăн сывлăшĕ те пӳлĕнчĕ.

— Турăçăм! Мăнукăм, ылтăнăм ман! — чĕтрекен аллисемпе ачана çупăрларĕ старик.

Тĕлĕннипе пĕр хушă никам та сăмах хушмарĕ. Хыçаларах тăракан олгузăн хура ещĕкне çеç тем пулчĕ:

пикенсех пиклетет. Олгузсем хăйсемпе хурсем какаланăнах шавласа кайрĕç.

— Каçарăр, мăнукăмсем. Пирĕн каймалла, — вĕткеленчĕ Токубай та. — Сирĕн йĕрĕрпе такамсем çывхараççĕ. Тăшмансем-и, туссем-и — тĕрĕслес пулать.

Олгузсем куçран çухалчĕç.

— Андрей, Андрей! Мăнасатте чĕрĕ, чĕрĕ! — телейĕ чунне шăнăçаймарĕ Рахимăн. — Утмăл çул çухалса пурăннăскер, тупăнчĕ вĕт!

— Кунтан мĕнле тухăпăр-ха? — юлташĕн савăнăçне пайлама васкамарĕ Андрей.

— Тухатпăр. Хăвах куртăн: олгузсем усал мар. Эх, туссем ăçта-ши?

Маччари люк уçăлчĕ те — пăх та кур! — сăмах çинех тусĕсем парашютистсем пек ӳке пуçларĕç. Айшагуль, Надя, Дима, Давид — пурте пур. Тĕлĕнӳ, савăну, çуйхашу — йăлтах пĕрлешсе кайрĕ.



## *Вунпĕрмĕш сыпăк. ХĂРУШĂ ЧИР*

Олгузсем çитсе кĕни çеç ачасене шăплантарчĕ. Салтаксем парада тухнăн утса стена икĕ енĕпе тăчĕç. Аллисемпе сулса пӳлĕмрен тухма сĕнчĕç.

Пысăк зал. Апат-çимĕç лартса тултарнă темиçе сĕтел. Йĕри-тавра вăрăм тумлă олгузсем вырнаçнă. Кĕрекери чи хисеплĕ вырăнта — Токубайпа вăрăм майракаллă олгуз.

— Иртĕр, тăванăмсем, иртĕр. Пĕрле апатланăпăр, — кăмăллăн чĕнчĕ Токубай.

Çинĕ хушăра никам та сăмах-юмах хускатмарĕ. Мĕнле кăна çимĕç çук. Кунашкаллисене ачасем ĕмĕрне те тутанса курман.

Акă пурте тăранчĕç пулас. Вăрăм майракалли çĕкленчĕ. Чăкăр-чăкăр, шăкăр-шакăр турĕ умĕнчи хура ещĕкĕ.

—Хаклă туссем! Сире олгуз халăхĕ ячĕпе саламлама ирĕк парсамăр. Эсир хăнасем çеç мар, пире инкекрен

хăтаракансем те пуласса шансах тăратпăр. Эп маларах чупса кайрăм-ха. Каçарăр. Йĕркипе ăнлантарам. Эпир – олгузсем. Сĕтел хушшинчисем — старейшинăсем. Мана Паладоил теççĕ (олгуз ыттисен ячĕсене те асăнса тухрĕ. Ачасем те хăйсемпе паллаштарчĕç.)

Акă мĕн каласа пачĕ Паладоил.

Олгузсем яланах кунта пурăнман-мĕн. Миллион çул каялла вĕсен тăхăмĕсем сӳнсе пыракан аякри çăлтăр çинчен куçса килнĕ. Хăйсен çĕршывне çухатнăскерсем, çĕнĕ планета шыранă. Пурте Çĕре килĕштернĕ. Карапне чулпа, хăйăрпа хупласа çĕр айне, ют куççенчен пытарнă. Çынсемпе юнашар пурăнма хăрушă, шутланă вĕсем. Çавăнпа çĕнĕ вырăн шырама та пăрахман.

Çĕр чăмăрĕ ăнăçлă планетах пулман олгузсемшĕн. Унсăр пуçне кунта хуçасем — çынсем — вăй илсе пынă. Ăсчах-олгузсем çав вăхăтра мăнаслашшĕсем тăван планета çинчех пуçланă тĕпчевсене малалла тăснă. Тăршшĕне çеç мар, вăхăт анлăшне те куçма май пулнине тĕпчесе тупнă вĕсем, ытти вăхăт виçисене кĕме вĕреннĕ. Вуншар пĕчĕк ракетăсем — тĕпчев карапĕсем туса хатĕрленĕ. Вĕсем вăхăт анлăшне урлă-пирлĕ кумнă. Кунсăр пуçне...

— Пулмасть ун пекки, — сасартăк вырăнтан сиксе тăрса ватă олгуза пӳлчĕ Дима Макаров. — Вăхăт анлăшĕнче куçма пулмасть, урăх виçесем пачах та çук. Шухăшласа кăларнă япала çеç вăл. Сирĕн умăрта ачасем лараççĕ пулсан вĕсене темĕн каласа улталма та пулать, çавах нимĕн те ăнланмаççĕ тесе ан шутлăр...

Залра шăп пулчĕ. Ăсчах олгузсем хăйсене çапла сĕмсĕррĕн пӳлнине хăнăхман, ахăр. Пичĕсем тĕксĕмленчĕç вĕсен, йĕркене пăсакан çине ӳпкевлĕн çаврăнса пăхрĕç пурте.

Ача хăй те тавçăрса илчĕ ĕнтĕ аванах хăтланманнине: хĕрелсе кайса кĕпи аркине йăвапарĕ, тăтăшах куçлăхне тӳрлетрĕ.

Шăплăха Алидогул текен олгуз сирчĕ. Пуçлăхне пӳ-

лекен çине ăшшăн пăхса йăл кулчĕ те вăл нимĕн пулман пекех хăй калаçма пуçларĕ.

— Шухăшласа кăларни мар çакă, ывăлăм, эпир пĕлекен уçлăхсăр пуçне урăххисем те нумай тĕнчере. Параллеллĕ тĕнчесем пирки Çĕр чăмăрĕ çинчи ăсчахсенчен чылайăшĕ те асăнаççĕ халĕ. Хăш-пĕрисен шухăшĕпе пĕр тĕнче уçлăхĕнчен тепĕрне лекес тесен таçта тĕнче хĕррине вĕçме кирлĕ мар, хăватлă энерги вăйĕпе анлăшне «шăтармалла» çеç. Эпир çакна ăçтан пĕлетпĕр тесе тĕлĕнтĕр-и? Эфиртан, паллах. Пирĕн çынсем çĕр çинчи мĕнпур çĕршывсенче те пулаççĕ, наукăпа техника çитĕнĕвĕсемпе кăсăклансах тăратпăр эпир. Чăнах та, çĕр çинчи ăсчахсен пире çитес тесен питĕ нумай ĕçлемелле. Çавах питĕ ăслисем те пур Çĕр çинче. Акă, Альберт Эйнштейн, сăмахран, магнит хирĕн пĕрлĕхĕн теорине туса хунă.

— Çук, туса хуман, ку енĕпе ĕçленĕ çеç вăл, — чăтса тараймарĕ Дима каллех, анчах çавăнтах шиклĕн йĕритавра пăхса илчĕ те шăпланчĕ.

— ... Пĕрлĕхлĕ теорине туса хунă, — нимĕн пулман пекех малалла каларĕ докладчик. — Çакна эпир хамăр разведчиксем ют çĕршывсенчен пĕлтернĕ тăрăх аван тавçăратпăр. Радиопа пичетре, паллах, ку хыпарсем тулли мар. Сăмах май каласан, Эйнштейн çитĕнĕвĕсем пирки халĕ шавламаççĕ. Вăл вара хăш-пĕр шухăшĕсене тахçанах пурнăçа кĕртнĕ. 1943 çултах Филадельфире вăрттăн тĕпчев ирттернĕ. «Элдридж» ятлă эсминеца — тинĕс карапне, тăшман локаторĕсем курмалла мар тăвас тесе хăтланса пăхнă кунта. Эйнштейн, ун чухне çар ведомствинче ĕçленĕскер, питĕ ансат шутланă; çутă пайăркисене пĕр-пĕринпе явма пултаракан электромагнитлă хир туса хурсан, вĕсен хушшинчи япала радаршăн çеç мар, этеме те курăнма пăрахмĕ-и? Тĕпчев никĕсне шăпах çак принципа хывнă та. Тĕпчев вара пурне те тĕлĕнтернĕ. Радарсен экранĕсенчен çеç мар, пăхса тăракансен куçĕнчен те çухалнă карап, урăх вăхăта куçнă. Кăштахран

каллех курăнма пуçланă вăл. Анчах унăн экипажĕ пĕтĕмпех ухмаха тухнă.

Каярах Эйнштейн ĕçне анлăлатнă, параллеллĕ тĕнчене алăк каснă, теме те юрать. Пирĕн ăсчахсем çакна Эйнштейнччен пилĕкçĕр çул маларах пурнăçланă. Çапла вара, саншăн калатăп, ачам, — Дима çине пăхса илчĕ Алидогул, тĕлĕнмелли нимĕн те çук кунта.

— Апла пулсан мĕншĕн никам та пĕлмест Эйнштейнăн ку ĕçĕ пирки? — парăнасшăн пулмарĕ Макаров.

— Мĕншĕн тесен вилес умĕн аслă физик хăйĕн алçырăвĕсене çунтарса янă. Çакна вара эпĕ хам куçпа курнă, унпа стена урлă çеç пурăнаттăм, унăн ассистенчĕ пулса ĕçлеттĕм, стена витĕр ятарлă аппаратпа пĕтĕмпех сăнаса тăтăм. Питĕ нумай çул эпĕ олгузсен разведчикĕ пулса тĕрлĕ çĕршывсенче ĕçлерĕм. Хăвăрах тавçăрма тивĕç, хăйсене майлă мар вĕсене çынсем хушшинче пурăнма. Çавăнпа пире, вĕсен патне комиссарпа тата курбашипе килнисене, илчĕç. Анчах та çакăн çинчен эпĕ сире каярах каласа парăп, халĕ малалла итлĕр, — терĕ вырăнтан тăрса Токубай, унтан ларчĕ те Алидогула пусĕпе сĕлтрĕ, малалла калама сĕнчĕ. Лешĕ хăйне нумай кĕттермерĕ.

Олгузсем урăх вăхăта куçма вĕренсен пĕчĕк тĕпчев карапĕсене вăхăт анлăшне вĕçмелле пăсса тунă. Унтан пысăк карапа реконструкцилеме тытăннă. Татса паман ыйтусем нумай сиксе тухнă кунта. Карап диаметрĕ темиçе километр пулнă-çке. Пиншер олгуз пурăннă унта. Ку пысăк яплана куçарас пулсан питĕ нумай энерги, çапла вара пысăк двигатель, пиншер литр топливо кирлĕ-çке. Топливо — хăватлă электромагнитлă хир туса хума май паракан шĕвек — арбузон, питĕ нумай япаласенчен тăрать, туса хатĕрлеме питĕ кăткăс ăна.

Темиçе тĕпчев ракетине ĕçлеме кирлĕ чухлĕ арбузон хатĕрличчен вуншар çул иртнĕ. Пĕрин хыçăн тепри ытти тĕнчесене курма кайнă вĕсем. Чылайран хăйсен тĕллевне пурнăçланах. Олгузсене пурăнма пур енĕпе те юрăхлă планета шыраса тупнă. Çак вăхăт анлăшне пысăк карапа

куҫарса ярасси ҫеҫ юлнӑ. Анчах та ҫакна тума темиҫе тонна арбузон кирлӗ-ҫке. Пӗр планета ҫинче ӑна ансат тумалли компонентсем тупнӑ. Ҫавӑнта хатӗрлесе васкавлӑн ҫӗр ҫине илсе килме тытӑннӑ ӑна. Роботсем вӗҫнӗ тӗпчев ракетисемпе. Ытти планетӑсем ҫинчен вӗсемех олгузсене кирлӗ япаласем, апат-ҫимӗҫ илсе килсе тӑнӑ...

— Каҫарӑр та, ӑҫта ларса, ӑҫтан вӗҫсе кайнӑ вара тӗпчев ракетисем? Вӗсене ҫӗр ҫинче ҫынсем асӑрхаман-ҫке?

Ҫакна сӑпайлӑ Давид ыйтрӗ. Нимӗн чухлӗ те вӑтанмасӑр, шӑпах ҫакна хӑй ыйтма тивӗҫ тесе, ахӑр.

— Асӑрхама май ҫук вӗсене. Ӑнлантартӑмӑр вӗт, пӗр тӗнчерен тепӗр тӗнчене вырӑнтан тапранмасӑр куҫма вӗренсе ҫитрӗмӗр тесе. Пирӗн тӗпчев ракетисем те ҫапла. Куҫран ҫухаласҫӗ вӗсем кунта, ирӗлсе кайнӑ пек, пачах урӑх планета ҫине пырса ларасҫӗ. Вӗсем кунта ларнӑ вырӑнӗсемпе эсир паллашнӑ ӗнтӗ. Шӑпах туннельсене ҫыхакан залсем вӗсем. Малтан, никам та ан куртӑр тесе, вӗсене чулсемпе хупласа хунӑ пулнӑ. Ҫӗршер ҫул ҫавӑнта ларнӑ вӗсем, хупланӑ тӑпра пусӑрӑнса тачӑ хупланӑ вӗсене. Вӗҫсе кайсан йӗрӗ чул ҫине ӳкерӗнсе юлнине те пӗлетӗр ӗнтӗ. Ҫав ракетӑсем патӗнчен пирӗн пата олгузсем тахҫанах хатӗрленӗ туннельсем илсе пыраҫҫӗ. Шӑпах ҫавсем тӑрӑх ҫитрӗр те ӗнтӗ эсир пирӗн карап ҫине.

Кӗске те туллин хурав. Олгузсен малашнехи пурнӑҫӗ пирки те докладчик ҫаплах каласа пачӗ.

... Карапа заправка тума кирлӗ арбузон пухиччен ҫичҫӗр ҫул иртнӗ. Пухса ҫитернӗ ҫеҫ, олгузсем темле хӑрушӑ чирпе аптрама тытӑннӑ. Инфекци епле лекнӗ карап ҫине — никам та пӗлмест. Тен, тӗпчев карапӗсем ытти планетӑсем ҫинчен илсе килнӗ, е ҫӗр ҫинчи ҫынсенчен ертнӗ ӑна ҫӗрлесенче ҫӗр ҫине уҫӑлма тухакансем. Чир питӗ хӑвӑрт сарӑлса пынӑ, врач-роботсем ӑна ҫӗнтереймен. Малтанхи тапхӑрта чире тупса палӑртма ҫукки те чӑрмав кӳнӗ, паллах, сывлӑх приборӗпе тӗпчесен ҫеҫ пӗлме май килнӗ ӑна. Чирлисем ҫӗршерӗн ухмаха тухнӑ, вӗсем тем

те пӗр хӑтланнӑ. Вӗсен пӗр ушкӑнӗ пӗррехинче карапа ертсе пымалли бокса тытса илнӗ, вӗҫсе кайма хатӗр карапӑн тулли бакӗсене уҫса арбузона ҫӗре тӑкнӑ. Ҫапла вара Ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчен каяссине каллех паллӑ мар вӑхӑта тӑсмалла пулнӑ. Шӑпах ҫав вӑхӑтра лекнӗ те карап ҫине комиссарпа Абдулла курбаши...

Каласа пӗтерме памарӗҫ докладчике. Ҫамрӑк олгуз зала чупса кӗрсе Паладоила вӑрттӑн темӗн каларӗ. Лешӗ вырӑнтан сиксе тӑчӗ, трибуна патне пычӗ.

— Каҫарӑр та, чӑрмантарма тивет сире. Мӗнпур плансене улӑштарма лекет пирӗн халӗ. Ачасемпе пӗрле карап ҫине килнӗ господина суеҫӗ машини ҫинче тӗпченӗччӗ. Пӗтӗмпех тӗрӗсне каласа пачӗ вӑл. Инкек пирӗн...

— «Шпион» пирки калать вӑл. Суясшӑн пулнӑ, машина вӑл суйнине тупса палӑртнӑ. Анчах эпир хӑш енчен-ха кунта пырса тиветпӗр? — пӑшӑлтатрӗ Рахим Андрее хӑлхинчен. Лешӗ аллипе ҫеҫ сулчӗ, Паладоил сӑмахне малалла итлерӗ.

— Инкек — хӑрушӑ чир, карап ҫинче ҫур ӗмӗре лӑпланнӑ хыҫҫӑн ҫӗнӗ вӑйпа чӗрӗлсе кайнӑ иккен. Вӑхӑтлӑха курӑнман, пытаннӑ ҫеҫ пулнӑ. Олгузсен виҫҫӗмӗш пайӗ чирпе асапланнине палӑртнӑ тӗпчев. Чирленисен пӗр ушкӑнӗ ҫулталӑк каялла радиопа ҫӗршывӑн чикӗ леш енчи пӗр ҫӗршыв разведкипе ҫыхӑннӑ, карап ҫинчен пӗлтернӗ. Ку ҫӗршыв разведкин резиденчӗ паян ҫӗрле палӑк ҫывӑхӗнче ҫав чирлисен ушкӑнӗн ертӳҫипе тӗл пулма палӑртнӑ. Ачасене пула тӗл пулайман вӗсем. Тавтапуҫ вӗсене. Ҫавах та пысӑк инкек ку пирӗншӗн. Вилӗм кӗтет пире, — тесе вӗҫлерӗ сӑмахне Паладоил.



## *Вуниккĕмĕш сыпăк. ВĂРТТĂНЛĂХ СИРĔЛЕТ*

Залра сасартăках шавлă пулса кайрĕ. Анчах Паладоил темиҫе сăмахпа аудиторие лăплантарма пултарчĕ.

— Халех саланма, ыйтăва татса пама тĕплĕн хатĕрленме сĕнесшĕн эпĕ сире, хăвăрах ăнланатăр пулĕ, ларутăру питĕ кăткăс. Ҫавах пурте пĕрле мĕн те пулин шухăшласа тупăпăр, — терĕ вăл.

Часах залра ачасемпе Токубай Хусейнов çеç юлчĕç.

— Ку историе кăштах ăнланма пуçларăм-ха эпĕ. Чылайăшĕ эпĕ малтан шутлани патне çывăха та пымасть. Çавах ăнланса çитерейменнисем те темĕн чухлех. Тен, эсир ăнлантарса парăр, Токубай пичче? — терĕ Андрей, старике пуç тайса.

— Уйрăммăн илсен мĕн кăсăклантарать вара сире? Ыйтăр, пĕтĕмпех хуравлама тăрăшăп, — терĕ лешĕ.

— Сăмахран, мĕншĕн эсир ĕмĕрне кунта ирттернĕ? Мĕне пула вилнĕ-ха комиссар? Манăн атте епле путса вилнĕ? Комиссар вилтăпри çинчи чечексем мĕншĕн шанмаççĕ? — сасартăк калаçăва хутшăнса шăпах ачасене пурне те шутсăр кăсăклантаракан ыйтусем парса тултарчĕ Рахим.

— Ун чухлĕ ыйтăва тӳрех хуравлама кăткăсрах пулать. Çавах та хăтланса пăхăп, — терĕ старик, хыçлă пукан çине канлĕн кĕрсе ларса. Сăмахĕсене йывăррăн сăрхăнтарчĕ вăл, куççулленчĕ, кăштах тытăнкаларĕ те. Çавах мĕнпур ыйтусем çине тĕплĕн ответлерĕ. Кунсăр пуçне çĕннине те сахал мар пĕлтерчĕ. Рахим ашшĕн вилĕмĕ пирки каласа пани тĕлĕнтерчĕ ачасене. Токубай сăмахĕсем тăрăх, ăна никам та вĕлермен, вĕлерме хăтланман та. Пурте ăнсăртран пулса тухнă. Олгузсен карапĕ çине çăмăллăнах лекнĕ вăл. Аслашшĕпе, Токубайпа, вăл вăхăта Америкăран е урăх çĕршывран разведкăран тин çеç таврăннăскерпе, тĕл пулнă. Олгузсем патне лекнĕ çынсенчен разведчиксем туса хурас тĕлĕшпе комиссарпа курбаши канаш панă иккен олгузсене.

— Вĕсем чи малтанхи разведчиксем пулнă, ахăр. Тĕрĕсех пĕлместĕп. Анчах та темиçе çул вĕсем пирĕнпе чăнах та пулмарĕç. Çухалнă пекех сасартăк пырса тухрĕç кайран. Пачах улшăннăччĕ ун чухне иккĕшĕ те. Комиссар таврăнсан «парти», «класс тăшманĕ», «буржуй», «коммунист» сăмахсемпе малтанхи пек час-часах усă курма пăрахнă. Курбаши çавна май тăтăшах шӳтленĕ унпа, сана

Мускавра пачах улӑштарса ячӗҫ, коммунистран демократ туса хучӗҫ тесе.

— Эпӗ яланах демократ пулнӑ, ҫавӑнпах РСДРПна кӗнӗ, коммунизм идейисем демократипе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ тесе шутлатӑп. Анчах та комюхӑмӑн хальхи деятелӗсемпе ҫула май мар мана. Пӗтӗмпе ура ҫинчен пуҫ ҫине тӑратрӗҫ вӗсем, ҫавӑн пек теорие пӑсса хучӗҫ. Шухӑшсене улӑштарни идейӑна улӑштарни пулмасть-ха вӑл. Акӑ сирӗн, прапорщик, идейӑсем нихӑҫан та пулман, тӗрӗс шухӑш пекех. Лаша-сурӑх кӗтӗвӗсемсӗр, пысӑк гаремсӑр нимӗн те кирлӗ мар сире, апла пулсан нимӗн улӑштарма та кирлӗ мар, — тесе кулса ирттерсе яратчӗ комиссар.

Анчах эпӗ, ачасем, айккине пӑрӑнтӑм-ха капла. Мӑнук олгузсем патне лекнӗ пирки каласа пама тытӑннӑччӗ-ҫке. Ҫапла, мӑнукпа тӗп пултӑм эпӗ, хыпарсене пӗлтӗм. Ӑна ӑсатма кайрӑм. Туннельпе пынӑ чухне, фонтан ҫывӑхӗнче тӗпчев ракетисенчен пӗри таврӑнчӗ. Нимрен тухса тӑчӗ сасартӑк, мӑнукӑн пӑшалне, стена ҫумне таянтарса хунӑскерне, айккинелле сирпӗнтерсе ячӗ. Аббаса хӑйне те аванах лектерчӗ ахӑр. Вӑл, питӗ хытӑ хӑраса ӳкнӗскер, малалла чупса кайрӗ, фонтана ӳкрӗ. Тухса ӗлкӗреймерӗ, авӑра туртса кӗчӗ ӑна. Кӑштах контузи те пулнӑ тесе шутлатӑп, унсӑрӑн ишсе тухатчех ӗнтӗ.

Токубай, хаваслӑ мар шухӑшсемпе чӗрине хускатнӑран ахӑр, шӑпланчӗ, нимӗн чӗнмесӗр, аллисене чӗркуҫҫисем ҫине хурса чылайччен ларчӗ.

Шӑплӑха Давид сирчӗ. Ачасем хушшинче чи чӑтӑмли тата сӑпайли каллех чӑтса тӑраймарӗ ахӑр.

— Каҫарӑр та, комиссар мӗнле вилни пирки каламарӑр-ҫке?

Токубай унӑн сӑмахӗпе шартах сикрӗ, ыйхине сирес тенӗ евӗр пуҫӗпе сулкаларӗ. Унтан вара лӑпкӑн Каланча тӑвӗн хӑвӑлне кӗнӗ хыҫҫӑн вӗсемпе пуринпе те мӗн пулса иртнине каласа пачӗ. Чекалин, Абдулла, Токубайпа красноармеецсем олгузсен карапӗ ҫине вӗсемшӗн питӗ йывӑр

вăхăтра лекнĕ иккен. Кунта хăрушă чир алхаснă. Олгузсен нумай çулхи ĕмĕчĕ — пурăнма лайăх планета çине куçасси — сӳннĕ. Çĕршер çул пухса пынă арбузона баксенчен юхтарса кăларнă-çке. Чире пула олгузсем пĕр-пĕринпе хирĕçнĕ, çапăçнă, пĕрне-пĕри вĕлернĕ. Унтан чирлисем пĕрин хыççăн тепри вилме пуçланă. Старейшинăсен хуйхăрмалли, шухăшламалли сахал мар тупăнса пынă. Çавăнпа та çынсене тыткăна илсен олгузсем вĕсене пурне те пĕр пӳлĕме хупса хунă та вĕсем çинчен маннă.

— Тĕрмене хупса хучĕç темелле ĕнтĕ пире ун чухне. Анчах та çакă туйăнмастчĕ. Пысăк пӳлĕмре çемçе вырăнсем çинче çывăраттăмăр, апат çиме кӳршĕ пӳлĕме — столовăйне çӳреттĕмĕр. Унтах санузел пурччĕ. Кунĕпе нимĕн тумасăр пӳлĕм тăрăх урлă-пирлĕ  куматтăмăр... Токубай, утмăл виçĕ çул каялла пулса иртнине аса илнĕ май куçне хупрĕ, çавах малтанхи пекех лăпкăн сăмахне тăсрĕ.

— Малтанхи кунах, пире пĕрле тытса хупнă хыççăн, комиссарпа курбаши тытăçса та илчĕç. Красноармеецсем, çав шутра эпĕ те, пулăшма ыткăнтăмăр. Пире хирĕç курбаши майлисем тăчĕç. Тӳрех вăйсем пĕр пек марри палăрчĕ. Вĕсем çиччĕн, пурте сывăскерсем, вăйлăскерсем, эпир пиллĕкĕн кăна, мана, ун чухне ача пек çеç курăнаканскере шутласан та. Çапăçу пуçланаймарĕ, роботсем — хăйсем тавра тем туса çӳрекен, ачасем салтак вырăнне йышăннă олгузсем çине кăтартрĕ Токубай, — пырса кĕчĕç те чарчĕç. Мирлешме тиврĕ пирĕн. Красноармеецсемпе басмачсем пĕрлешсе тепĕр кунах картла выляма тытăнчĕç. Комиссарпа курбаши уйăха яхăн пĕрне-пĕри асăрхамастчĕç. Кайран калаçса кайрĕç те вĕсем пĕрне-пĕри тахçанах пĕлни паллă пулчĕ. Вăрçăченех комиссар Абдулла пурăннă уес центрĕнче тухтăр пулса ĕçленĕ иккен. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче капитан погонĕсемпе çӳренĕ. Абдулла прапорщик çеç. Çапла пĕрне-пĕри палласа илчĕç те туслашсах кайрĕç çаксем. Эпĕ ялан вĕсем мĕн каланине итлесе ларăттăм.

Комиссар, ăста тухтăр пулнăскер, часах олгузсен чирне епле сыватмаллине тавçăрса илчĕ пулас. Унтан вĕсем курбашипе пĕрле олгузсен чирĕнчен сыватма пултаракан эмел шутласа тупнă.

— Эмелне тупнă пулсан мĕншĕн апла халĕ сыватмаççĕ олгузсене унпа? — тĕлĕнчĕ Дима.

— Эмел пулнă, вăхăтĕнче мĕнпур олгузсене сипленĕ унпа. Анчах та халĕ вăл эмел çук. Мĕнле хатĕрлемеллине те никам та пĕлмест. Каланăччĕ ĕнтĕ эпĕ, эмелне комиссарпа курбаши хатĕрленĕ. Вĕсем çухалсан эмел те юлман. Вăл кирлĕ те пулман-ха, чирлисем пĕтнĕ-çке. Аллă çултан çеç, эмелпе усă курнă хыççăн çуралнă ачасем те ӳссе çитĕнсе ватăлсан, чир çĕнĕрен асса кайрĕ.

— Апла, эмел мĕнле тумаллине манса кайнă, эсир ăна сире эпир туса парасса кĕтетĕр ĕнтĕ, çапла-и? Ачасем, темшĕн эпир тытăнсан çав эмеле çĕнĕрен тăваятпăрах пулĕ тесе шутлатăп эпĕ. Нумайăн эпир, ытла ухмах çынсемех те мар. Комиссар пĕччен тунă темелле. Вăхăт та çавна тума нумай иртмен пек ăнланатăп эпĕ, — терĕ Андрей. — Анчах та комиссар çав эмеле хăçан, мĕнле условисенче тума тытăннине пĕлмелле. Тен çырса хунисем юлнă пулĕ?

— Хăçан тытăннине тĕрĕс астумастăп эпĕ, — хуравларĕ Токубай. Анчах та эпир пĕчĕк олгуз ачипе, Калидуилпа, тĕл пулнă хыççăн ахăр. Комиссар медицина робочĕ пулăшнипе унăн ӳт-пĕвне тĕпчетчĕ. Çапла, эмел тума пуçласси шăпах Калидуилпа çыхăннă тесе шутлатăп.



## *Вунвиççĕмĕш сыпăк. ЭМЕЛ*

— Калидуил ман çулалли ачаччĕ. Е манран, ун чухнехинчен, çамрăкрах та пулнă. Ашшĕ унăн пире пăхса тăракан ушкăнра ĕçленĕ пулас. Тен, ăна пирĕн шухăшсене пĕлес тесе пирĕн пата ятарласа янă? Чире тĕпчес тесе ăна комиссар старейшинăсенчен ятарласа ыйтса илме те пултарнă. Калидуил каланă тăрăх унăн тăванĕсем пурте чирпе аптăранă. — Кăштах усĕрсе илсен каллех сăмахне тăсрĕ Токубай. — Комиссарпа курбаши пĕрле питĕ нумай пулатчĕç, пĕр-пĕринпе темĕн çинчен чылай калаçатчĕç. Шăпах çав тавлашусенчен пĕрин вăхăтĕнче эмел ăсталас шухăш тытнă ахăр вĕсем. Старейшинăсем ăна медицина роботне панăччĕ, вăл больницăна чирлисене пăхма чăрмавсăр кĕме пултаратчĕ. Начар мар тухтăр пулнă ĕнтĕ, эмел хатĕрлес тĕлĕшпе хăвăрт çитĕнӳ турĕ. Анчах эмел формулине шутласа тупсан та ăна хатĕрлесси пысăк чăрмавччĕ, тĕп порошокне тума пĕр япала çитменни палăрчĕ. Çавăн чухне комиссар хăйне çĕр çине япаласем илме ыйтма янă пулĕ. Лешĕсем комиссара Мускава янисĕр пуçне курбашие те ют çĕршывсене ăсатнă.

Олгузсемшӗн питӗ нумай ӗç тунӑ вӗсем кӗске хушӑра. Комиссарпа курбаши çухалнӑ хыççӑн разевдкӑна пире ярсан вӑрттӑн хваттерсемпе шпионсен ушкӑнӗсене Çӗр çинчи вунӑ хулара туса хунине куртӑмӑр. Вӗсемсӗр пуçне çакна тума никам та пултарайман, паллах, пирӗнччен олгузсем çынсемпе хутшӑнман. Олгузсен шанчӑклӑ çыннисем епле пулса тӑнӑ вӗсем — тӗлӗнмелле. Талант пулнӑ ахӑр, ахальтен мар çӗр çинче иккӗшӗ те отрядсене ертсе пынӑ. Мӗнле майпа коммунист сасартӑк хӑйӗн идейисене пӑрахса таçтан килекенсем валли шпионла ӗçсем тума пуçланӑ? Паллӑ мар. Çын вӗлерен тата бандит Абдулла гуманист пулса тӑрса ют çӗрте хӑйӗн пурнӑçне шеллемесӗр этемсемшӗн те мар — темле олгузсемшӗн ӗçлени тӗлӗнтерет. Вӑл комиссарпа хӑвӑрт туслашса кайни те шалт аптраттарать.

Çак ыйтусем тавра тавлашу пуçласа ячӗç ачасем. Анчах чи пысӑк ыйтӑвӗ çакӑ пулчӗ: комиссарпа курбашине мӗн пулнӑ-ха?

— Ку ыйту çине хам та хуравлама пултараймастӑп эпӗ, — терӗ Токубай мучи. Виççӗшӗ те, вӗсемпе пӗрле пӗчӗк Калидуил пулнӑччӗ, тесе каласа патӑм-çке сире, сасартӑках пӗр йӗрсӗр çухалчӗç. Комиссара тупнӑ вырӑн пирки эпӗ тинтерех çеç, мӑнукран — Аббасран илтрӗм. Çакӑнччен кӑшт çеç маларах мана ваттисен канашне суйланӑччӗ, черетлӗ ларура çакӑн пирки олгузсене пӗлтертӗм. Архив çӗклесе çав вӑхӑтри хутсене пӑхса тухрӑмӑр, вӗсем пирки нимӗн те тупаймарӑмӑр. Комиссара чысласа палӑкне лайӑхлатас терӗмӗр вара, вӑл олгузсене вилсе пӗтересрен сыхласа хӑварнӑ-çке. Эпӗ хам çеç мар, ваттисем пурте вилтӑпри çинче пулса куртӑмӑр. Чи ӑста инженерсем проект хатӗрлерӗç, часах палӑк тавралӑхӗ рай пахчи евӗр пулса тӑчӗ.

— Палӑк тавралӑхӗ инженерсен ӗçӗ çеç тесе каласшӑн-и эсир? — чӑтса тӑраймарӗ Гриня. Нимӗнле асамлӑх та çук-и унта?

— Çук, паллах. Шӑвару системи, удобренисемпе апат-

лантарса тăни... Питĕ ансат механизм. Олгузсем тахçанах ӳсентăрансене хăвăрт ӳссе çитĕнме, авăнми туналлă ӳстерме май паракан удобрени шутласа тупнăччĕ. Çав удобренипе анлă усă кураççĕ палăк таврашĕнче, мĕнпур ĕçе компьютер йĕркелесе тăрать.

— Эпĕ асамлăх тесе шутланăччĕ, — кăмăлсăррăн тăсса каласа хучĕ Маре, çивĕтне юсакаланă май, — халĕ пĕтĕм кăсăклану пĕтрĕ ĕнтĕ.

— Мĕнле кăсăклă мар çакă, тата мĕнле кăсăклă, — тавлашăва кĕчĕ Дима, — çынсем шутласа тупнă юмахçке ку... Çынсем мар, анчах та ăс. Çавах ку. Юмахпа епле танлаштарăн çакна? Аса илĕр-ха юрă сăмахĕсене: «Эпир юмаха чăна çавăрма çуралнă». Çапла вĕт. Комиссара аса илĕр. Вăл та юмаха чăна кăларнă, олгузсене чиртен сыватмалли эмел шутласа тупнă. Сăмах май каласан, Токубай мучи, ăнланмарăм эпĕ, епле сирĕн эмел çук пулать, ăна комиссар курбашипе пĕрле туса хатĕрленĕтĕк. Вĕсенчен хăшĕ те пулин рецепт хăварнах ĕнтĕ. Эмеле сывлăх робочĕпе хатĕрленĕ вĕсем. Рецепт робот ăс-тăнĕнче юлмалла çеç мар, карапăн тĕп компьютерĕ çине куçмалла пулнă. Тĕрĕс-и?

— Тĕрĕс, ачам. Рецептне тĕп компьютерта шыраса тупрăмăр ĕнтĕ. Анчах ку рецепта хатĕрленĕ эмел чире сыватмасть темшĕн. Комиссарпа курбаши ку эмел çине кайран тата темскер хушнă ахăр. Малтан вĕсем роботпа пĕрле больница тăрăх çӳресе тĕпчевсем ирттерчĕç. Ăна лайăх астăватăп. Хам та хăш-пĕр чухне хыçалта çӳреттĕм. Кайран, вĕсем хатĕрленĕ малтанхи эмел усăсăр пулни палăрсан, вĕсем вăрттăн тем çинчен чылай калаçрĕç. Апатланнă чухне те тавлашатчĕç. Пĕррехинче ăнсăртран комиссар «Калидуил чирлемест-çке. Мĕнпур тăванĕсем чирлĕ, чылайăшĕ вилсе пĕтнĕ. Вăл хăнк та тумасть. Ыттисем...» тени хăлхана кĕчĕ. Столовăйра шавлăччĕ те, малалла мĕн каланине илтеймерĕм. Курбаши хирĕç каланинчен юлашкине питĕ аван астуса юлтăм вара. «...Ачасем. Анчах вĕсем те тĕрлĕрен пулаççĕ. Çынсен ачисем

кирлӗ. Ҫавна питӗ аван туятӑп эпӗ. Сан пекех. Больницӑсем тӑрӑх ҫӳремелле пирӗн ҫӗр ҫине тухса. Ман сӑмахсем тӗрӗссине хӑвах курса ӗненӗн ун чухне», — терӗ вӑл. — Токубай ҫамки ҫинчи тарне алтутрипе шӑлса типӗтрӗ те шӑпланчӗ.

— Эпӗ ӑнлантӑм! — кӑшкӑрса ячӗ Андрей сасартӑк. — Ӗненетӗр-и, ӗненместӗр-и, ачасем, пӗтӗмпех пуҫа пырса кӗчӗ-ҫке. Эмелте мӗн ҫитменнине те, комиссарпа курбаши, Калидуил ӑҫта ҫухалнине те пӗлетӗп халӗ. Ӗненчӗр тесе Токубай мучи каласа пӗтерменнине уҫса пама пултаратӑп. Акӑ, комиссар мӗн каланӑччӗ-ха? «Ыттисем...» тенӗччӗ. «Ыттисем те чирлемен» тесе каланӑ вӑл. Ачасем пирки ӗнтӗ. Чире ачасем парӑнманни ҫинчен сӑмах пынӑ вӗсен. Чиртен сыватмалла тӑвас тесен эмеле этем ачисен юнӗпе хутӑштарма кирли ҫинчен калаҫнӑ. Тӗрлӗ хуласене ҫитсе кирлӗ чухлӗ юн пухнӑ, эмел хатӗрлесе чире ҫӗнтернӗ. Чир нумай ҫултан ҫӗнӗрен сарӑлса кайнине туйса эмеле тата ытларах хатӗрлесе хурасшӑн пулнӑ. Шӑпах юн шырама кайсан ҫухалнӑ вӗсем.

— Тем, ӑнланмарӑм, мӗнле юн, мӗншӗн? — аллипе ӗнсине хыҫса илчӗ Гриня.

— Ача юнӗ илме кайнӑ. Мӗн ӑнланмалла марри кунта? − хӗрсе кайрӗ Андрей. Калӑр-ха, Токубай мучи, комиссарпа курбаши хӑйсем ҫухалас умӗн сирӗнтен юн илчӗҫ-и?

— Ҫапла, илчӗҫ. Сывлӑх робочӗ юн тымарӗнчен илчӗ. «100 грамм ҫеҫ илетпӗр, эсӗ те олгузсем пек чирлесе кайман-и?» тенӗччӗ курбаши. Эсӗ ун пирки ӑҫтан пӗлетӗн вара? — тӗлӗнчӗ старик.

— Ак ҫакӑнтан, — Андрей кӗсйинчен пӗчӗк хут листи кӑларса силлерӗ.

— Мӗн ку? Ӑҫта тупрӑн? — ҫавӑрса илчӗҫ ӑна юлташӗсем.

— Комиссарӑн кун кӗнекин листи вӑл. Лешӗнчен, пистолетлинчен тарнӑ вӑхӑтра ту хӑвӑлӗнче тупрӑм. Кӗсъене чикнӗччӗ те, пачах манса кайнӑ ун ҫинчен. Тин ҫеҫ аса илтӗм. Нумай ҫырман унта, анчах та пурне те ӑнланма

пулать. Пурте ансат иккен. Нимĕнле тĕлĕнтермĕш те çук.

— Нумай ан калаç эсĕ, вула хутна, — тусĕн хулпуç-çийĕ çине аллине хучĕ Дима. — Питĕ пĕлес килет унта мĕн çырнине. Ыттисем те кăсăкланаççĕ авă.

— Акă, итлĕр эппин:

«... Мĕнле кун паян, çине-çине ăнмасть. Чи лайăх тус-сене çухатрăм. Лăпкă çывăрăр, Абдуллапа Калидуил. Мĕн тума Кабула каллех каймаллаччĕ-ха пирĕн? Кăштах, пĕ-рер уйăх тăхтаса инçерех, Америкăна е урăх çĕршыва кайма пулатчĕ. Кунта пире асăрхаса юлса кĕтни паллăччĕ вĕт. Тепĕр уйăхран манса каятчĕç пограничниксем пирĕн çинчен, кĕтме пăрахатчĕç ахăр. Тин çеç Тегерана çине-çине миçе хутларăмăр пулĕ те, кĕтсе тăнă ĕнтĕ. Уйăх ытла Тегеран больницинче çӳресе кирлĕ чухлĕ юн ту-паймарăмăр та. 536 ачаран çиччĕшĕн юнĕ çеç пире кирли. Нормăпа кирлĕ саккăрмăшне Токубайран илмелле пулчĕ ун чухне. Аван-ха, унăн юнĕ юрарĕ. Чире çĕнтертĕмĕр. Эмел пĕтĕмпех пĕтрĕ пулин те. Запасне кайран та тума пулатчĕ-çке. Уйăхран, çулталăкран, вунă çултан та. Чир çĕнĕрен 50-60 çулсăр килеймессине питĕ тĕрĕс шутласа тупрăмăр вĕт Абдуллапа. Çавах вăл халех запас хатĕр-лесе хума тĕв турĕ. Мĕншĕн кĕтмелле пуçсем сывă чухне? Урăх хулана вĕçетпĕр тет. Пирĕнпе мĕн те пулин сиксе тухсан кам хатĕрлесе парĕ ăна вĕсене тет. Хатĕрлерĕмĕр, акă. Юн та çук, туссем те пĕтрĕç. Епле те пулсан сывă юласчĕ. Мансăр пуçне чирпе епле кĕ-решмеллине никам та пĕлмест-çке. Сывлăх робочĕ эмел туса курнăскер, пирĕнпе пĕрле пĕтрĕ. Карап çинче тепри пур-ха, эмел тума хутшăннăскер. Анчах вăл эмел çине юн ярса пăтраштармаллине пĕлмест.

Аван шаплаттарса антарчĕç пире. Каланчаран вунă ки-лометртан ытла та кайманччĕ — залп кĕрĕслетрĕ. Ирт-нинчех хатĕрленсе тăнă ĕнтĕ. Вĕçев аппаратне ала пек шăтарса пĕтерчĕç. Каялла епле вĕçсе çитрĕмĕр — тĕ-лĕнмелле. Абдулла вырăнне Калидуил вилнĕ пулсан эпĕ те пĕтеттĕм. Юрать, олгуз ачи аппарата каялла ту хă-

вăлне илсе кайса лартма хал тупрĕ. Аманса пĕтнĕскер, мăйракасемсĕр ту хăвăлĕн ансăр çăварне вĕçсе кĕме пултарчĕ мăнтарăн ачи. Ларнă хыççăн çеç вилсе кайрĕ. Манăн вара чĕрĕ юлса карап çине çитмеллех. Олгузсем хăйсене сыватаканни суйласа илнĕ ачасен ю...»

Андрей вуласа пĕтерчĕ те хутне Токубая тăсса пачĕ.–

— Урăх нимĕн те çук. Ытти тепĕр листа çинчен пулнă, вăл çухалнă ĕнтĕ, — тесе хучĕ.

— Эпĕ пĕлетĕп комиссар тепĕр листа çине мĕн çырнине. Тавçăрса илтĕм. «Олгузсем хăйсене сыватаканни суйласа илнĕ ачасен юнĕ пулнине те пĕлмеççĕ-çке» тесе çырнă вăл тахçан, — хушса хучĕ Гриня.



## *Вунтӑваттӑмӗш сыпӑк. АРБУЗОН*

Ваттисен тата ӑсчахсен канашӗсен пӗрлехи ларӑвӗ малтан палӑртнӑ пекех шӑп виҫӗ сехетрен малалла тӑсӑлчӗ. Олгузсем чӗнессе кӗтмесӗрех пӗрин хыҫҫӑн тепри трибуна ҫине тухса хӑйӗн шухӑшӗсемпе паллаштарчӗҫ. Хӑш-пӗрисем этемсемпе хутшӑнма тытӑнма, ҫывӑхри патшалӑх правительствине хӑйсем ҫинчен пӗлтерме сӗнчӗҫ. Мӗн пулсан пулать, — текен шухӑш пуҫ пулчӗ вӗсен сӑмахӗсенче. Теприсем карап таврашӗнчи мӗнпур туннельсене хупласа кӗтме кирли ҫинчен каларӗҫ. Карапа тупаймасан олгузсем пуррине ӗненме пӑрахӗҫ имӗш вӗсем. Чирлисене карап ҫине хӑварса сыввисене тӗпчев ракетисемпе урӑх планета ҫине илсе тухма сӗнекенсем те тупӑнчӗҫ тухса калакан ваттисемпе ӑсчахсем хушшинче. Ҫак сӗнӗве хирӗҫ никам та сӑмах каламарӗ, хӑшпӗрисем пӗчӗк ракетӑсемпе пурне те хӑварт илсе кайма май пурри пирки ҫеҫ иккӗленчӗҫ. Ҫакна тума вӑхӑт та, горючи те ҫитмессе пултарать.

Анчах та ку сӗнӳ ачасене тарӑхтарса ячӗ.

— Мӗн сӗнетӗр эсир? Чирлисене пиншерӗн вилме хӑварни тӗрӗс тесе шутлатӑр-и? Этемле мар ку ӗҫ, —

трибуна умне сиксе тухрӗ чӑтайманнипе Надя Голубева.

Ун сӑмахӗсем ҫине никам та тимлӗх уйӑрмарӗ.

— Ӑнланмастӑп, тӗрӗс марри мӗн пур кунта? Чирлисен ҫавах вилмелле, сыввисене илсе тухса олгузсен пӗр пайне те пулин сыхласа хӑваратпӑр. Лайӑхрах меслет ҫавах ҫук вӗт пирӗн, — ӑнлантарма тытӑнчӗ Паладоил.

— Ҫук мар, пур, — вырӑнтан сиксе тӑчӗ Андрей. Эпир сире питӗ лайӑх меслет сӗнме пултаратпӑр, чирлисене пурне те сывататпӑр.

— Ҫакна тума май ҫук. Тахҫан икӗ ҫын олгузсене сыватма хатӗрленӗ эмелӗн рецептне ҫухатнӑ. Ку эмелсӗр чирпе кӗрешеймӗпӗр.

— Эпир эмел туса паратпӑр сире. Эмел никӗсӗнче ҫӗр ҫинчи сакӑр ачан юнӗ пулмалла. Хамӑр юна пама хатӗр эпир сире. Вӑл юранине ҫеҫ пӗлместпӗр, — Андрей тусӗсем ҫине аллипе сулса кӑтартрӗ.

— Тӗрӗслеме питӗ ансат. Эмеле хатӗрлеме хутшӑннӑ робот упранса юлнӑ пирӗн. Кивӗскер вӑл, рецептне унтан пӗлме ҫук, анчах эмел хатӗрлеме пултарать. Сирӗн юна тӗрӗслеме те. Темиҫе сехет ҫеҫ кирлӗ ҫакна тума, — Паладоил юнашар тӑракан робота тем каларӗ. Лешӗ тухса кайрӗ.

Трибуна ҫине Алидогул тухрӗ.

— Лару-тӑру улшӑннӑ май каллех малалла мӗн тумаллине палӑртма тивет пирӗн. Чир пирӗншӗн хӑрушӑ мар-тӑк, тепӗр ҫивӗч ыйту тухса тӑрать. Мӗнле пурӑнмалла? Ӗлӗкхи пек пулаймӗ малашне. Паян-ыранах ҫынсем пирӗн карапа шырама тытӑнӗҫ. Часах тупӗҫ те. Эсир ӑнлантӑр пулӗ ӗнтӗ, кӑткӑс ӗҫ мар ҫакӑ. Юлашки талӑкра ҫеҫ миҫе хӑна илчӗ пирӗн пата. Ҫынсемпе хутшӑнма юрамасть пирӗн, мӗншӗн тесен тӗлпулу мӗнле хӑрушӑ иккенне хамӑр курса ӗнентӗмӗр. Телее, лайӑх ҫынсем ҫеҫ лекрӗҫ пирӗн тӗле. Пурте вӗсем сахал мар пулӑшрӗҫ пире. Маларах мӗн пулнине аса илесчӗ. Хроникӑсене ӗненес пулсан сайра хутра, кӗске вӑхӑта ҫеҫ тӗл пулнӑ пирӗн мӑнасаттесем ҫынсемпе. Ҫавах хӑрушӑ чир ертнӗ. Кашни кун тӗл пулма тытӑнсан мӗскер сиксе тухӗ? Тӗлпулусем хыҫҫӑн 800 ҫултан ҫынсем хушшинче питӗ нумай ҫӗнӗ

чирсем аталанса кайни пирки манас марччӗ. Вӗсенчен хуть те хӑшӗ те олгузсене пӗри юлмиччен пӗтерме пултарать. Анчах халӗ пире никам пулӑшаймӗ.

— Мӗншӗн пулӑшаймӗ? Эпир пулӑшатпӑр. Халех пулӑшӑпӑр акӑ. Мӗншӗн тесен шӑпах халӗ нимӗн тума пӗлместӗрҫке эсир? Ҫур пулӑшу патӑмӑр ӗнтӗ. Ҫакӑ, паллах, ҫителӗксӗр. Малтанхи пулӑшу ниме те тӑмӗ эсир кунтах юлас пулсан. Ман шухӑшсем тӗрӗс пулсан ку енӗпе те пулӑшатпӑрах эпир сире. Ҫак кунсенчех лӑпкӑнах Ҫӗр ҫинчен куҫса кайма пултаратӑр, — терӗ сасартӑк Дима.

Олгузсем хушшинче кӑшкӑрашни, пӑшӑлтатни илтӗнсе кайрӗ. Ачасем Макарова ҫавӑрса илчӗҫ.

— Эсӗ мӗн, пирӗнтен куласшӑн-и, е ӑсран тайӑлтӑн? — алли тупанӗпе ҫурӑмӗнчен ҫапрӗ ӑна Маре.

— Шӑплан тархасшӑн, намӑс ан кӑтарт пире, — хӑлхинчен пӑшӑлтатса каларӗ Айшагуль. Гриня нимӗн чӗнмесӗр чӑмӑрккине кӑтартрӗ.

Анчах Дима чарӑнма шутламарӗ. Тусӗсене сирсе ярса вӑл Алидогул патне ҫывӑхарах пычӗ.

— Калӑр тархасшӑн, эсир арбузон текенни ҫӗр ҫинче чӑнах та ҫук тесе шутлатӑр-и? — ыйтрӗ вӑл ватӑ олгуза куҫӗнчен пӑхса.

— Ҫапла. Ӑна пирӗн ученӑйсем ултҫӗр ҫул каяллах ҫирӗплетсе каланӑ.

— Мӗнлерех шӗвек вара арбузон? — Дима кӗсйинчен пӗчӗк ҫеҫ кӗленче кӑларчӗ. Унта темле шӗвек чӳхенет.

— Кӑтарт-ха, кӑтарт, — Паладоил ҫатӑрах ярса тытрӗ кӗленчене. Алли ҫине тумлатса шӑршласа пӑхрӗ. — Тупрӑмӑр, тупрӑмӑр! Ҫӑлӑнтӑмӑр! — ҫавӑнтах аванмарланса шӑпланчӗ. — Эс, эс ӑҫта илтӗн ӑна? Нумай-и унта арбузон?

— Пи-итӗ нумай. Аялта, ту хӑвӑлӗнче. Ачасем, астӑватӑр-и «типӗ шыва»? Арбузон пулнӑ вӗт вӑл, арбузон! Сирӗн карапран юхса тухни.

Ӗнтӗ пурин савӑнӑҫне палӑртма сӑмах та, ҫырма вырӑн та ҫитмӗ.



## *Вунпиллӗкмӗш сыпӑк. АСӐРХАТТАРУ*

Ӗҫ-пуҫ ҫапла пулса тухнишӗн пурте питӗ хытӑ савӑнчӗҫ. Ватӑсем ачасене ыталаса ҫупӑрларӗҫ, тав турӗҫ, туссем хӑйсем те савӑннипе юрламанни ҫеҫ. Дима роботсене тата механик-олгузсене халех арбузон шырама илсе кайма пулчӗ. Анчах та маларах ачасенчен пуринчен те юн илчӗҫ. Питӗ хӑвӑрт та пӗр ыраттармасӑр туса ирттерчӗ ҫак ӗҫе сывлӑх робочӗ.

— Уколтан ачаран хӑратӑп. Кунта сисмерӗм те, — тӗлӗнсе пӑхрӗ кайран Гриня алли ҫине. Йӗрӗ те юлман вӗт.

Ҫур сехетрен робот пурне те тӗлӗнтерсе пӗтӗмлетӳ турӗ: эмел тума кашнин юнӗ те юрӑхлӑ.

— Шухӑшламанччӗ те. Пиртен пӗрин е иккӗшӗн юнӗ

юрăхлă пуласса та шанман эпĕ. Кунта вара «пурин те юрăхлă» тет. Апла эпир пурте чăнах та тĕлĕнтермĕшсем, ачасем. Саккăрăн 536 ачана тăратпăр эпир. Шăпах çавăн чухлĕ ача хушшинче çиччĕшне юрăхлине тупнăччĕ тесе çырнă-çке комиссар. Мĕнле пулса тухать-ха çакă? Пирĕн юн ушкăнĕсем кашниййĕн тĕрлĕрен пулнине лайăх пĕлетĕп-çке эпĕ. Сăмахран, манăн тăваттăмĕш ушкăн, Диман иккĕмĕш, Рахимăн виççĕмĕш отрицательнăй текеннисем. Заставăра тĕрĕслеттернĕччĕ пĕлтĕр пĕр пограничника амантнă хыççăн ăна юн кирлĕ пулсан. Анчах та илмерĕç пирĕнне ун чухне: пĕчĕк терĕç, пирĕн юнсăрах тупрĕç, — тĕлĕннĕн каласа хучĕ Давид.

— Çавах мар-и халĕ, мĕнле ушкăнра ман юн? Эмелшĕн çакă ниме те пĕлтермест. Çавăнпа пĕрлех ачасенчен хăш-пĕрисен анчах юнĕ эмел тума юрăхли паллă, — терĕ Маре.

— Сирĕншĕн паллă, маншăн çук, — мăкăртатарĕ Гриня. Калăр-ха тархасшăн, мĕн пулса иртнĕ комиссарпа?

— Кун кĕнекинче çырнине вуланине тимлĕрех итлемеллеччĕ, — татса хучĕ Надя. — Питĕ ансат истори ку. Комиссарпа курбаши космос карапĕ çине мĕнле лекни, епле туслашни пирки Токубай мучи каласа пачĕ ĕнтĕ пире. Шăпах пĕр-пĕринпе канашласа çĕнĕ туссем олгуззене хăйсем вĕсене пулăшма хатĕрри çинчен пĕлтернĕ ахăр, вĕсен шпионĕсем пулса тăнă. Олгузсем вĕсене, паллах, питĕ лайăх документсем туса панă. Карапран çĕр çине вĕсем Каланчари ту хысакĕнчи хăвăлтан тухса çӳренĕ ахăр. Унта вĕçекен аппарат ларнă пек ăнлантăм эпĕ комиссар çырса хăварнинчен. Мĕншĕн çак аппарат штурвалĕ умĕнче пĕчĕк олгуз — Калидуил ларнă, тавçăраймарăм. Тен, пĕчĕккĕ пулнăран, çынсем ăна асăрхамасса та пултараççĕ тесе, тен, вăл хĕвел çутинчен хăраман. Вĕсем яланах çĕрле çеç вĕçнĕ ахăр, çавах та…

Чикĕ леш енче Калидуил пассажирсене антарса кайран кĕтсе илмелли вырăн пулнă ахăр вĕсен. Юн илме суя хутсемпе усă курнă пулĕ тетĕп. Больницăсене çӳре-

нĕ, чирлисене тĕрĕсленĕ, юн тĕслĕхĕсене илнĕ. Çапла кирлĕ чухлĕ чĕртавар хатĕрленĕ. Юлашкинчен ĕç ăнман вĕсен. Пограничниксем, пĕлместĕп, пирĕннисем е чикĕ леш енчисем, темле паллă мар вĕçев аппарачĕ унта-кунта кумнине кура сыхласа тăнă вĕсене, персе сиенлетнĕ. Абдулла тӳрех вилнĕ. Калидуил та аманса пĕтнĕ. Кунсăр пуçне осколоксем унăн икĕ мăйракине те касса татнă. Кайран комиссар шăпах çав мăйракасене хăйпе пĕрле илнĕ, Рахим мăнасламăшĕн арчине лекнисем те çавсемех. Килидуил вĕçев аппаратне — шăтса пĕтнĕскере, çавах илсе çитернĕ ту хăвăлне каялла, вилсе кайнă. Олгузсем питĕ тӳсĕмлĕ чĕрчунсем пулнинчен килет ахăр çакă. Пĕр сăмахпа каласан, комиссар пĕччен тăрса юлнă, космос карапĕ çине кайнă май ăнсăртран киле таврăнакан тĕпчев ракети çулĕ çине пулнă. Лешĕ сирпĕтсе янă ăна. Хăраса ӳкнĕскер, комиссар тара панă, аташса кайнă, чул тăпрапа ылмашăннă çĕре тухсан, çемçескере чавма пуçланă çĕр çине тухас тесе. Кун пирки Андрей каласа пачĕ ĕнтĕ пире.

Çав вăхăтра зал каллех пушанса юлнăччĕ ĕнтĕ. Ăсчахсемпе ваттисенчен ытларахăшĕ хăйсен ĕçĕпе саланчĕç. Паладоил, Алидогул тата Токубай ачасем патне пычĕç.

— Арбузон пур пирĕн халь, ăна космос карапĕн бакĕсене уçласа кĕртме икĕ кунтан ытла вăхăт кирлĕ мар. Питĕ пысăк тав сире, ачасем, пулăшнăшăн. Инçе пулатпăр часах. Никам та тупаймĕ. Урăх тытса тăрасшăн мар эпир сире кунта. Юлташăр таврăнсанах кайма пултаратăр. Аçăр-аннĕрсем тахçанах пăшăрханаççĕ ахăр. Пирĕн шанчăклă тус Токубай та сирĕнпе пĕрле тăван ялне таврăнма кăмăл турĕ. Анчах темле тав сăмахĕсемпе те ун умĕнчи хамăр парăма татса пĕтерейменпĕр эпир. Сывлăхлă пултăр çеç. Тата тепĕр хут пысăк тав сире те. Токубая пулăшăр. Малтанласа йывăр килĕ ăна ялта. Тахçантанпа пулман-çке унта. Эсир кунта пулни пирки никама та ан калăр. Сирĕншĕн те, чи малтан вара Токубайшăн, сиенлĕ пулма пултарĕ пакăлтатса çӳрени. Ялта ĕмĕр

тăршшĕпех хулара пурăннă тесе калĕ вăл. Питĕ лайăх хутсем туса патăмăр эпир ăна, такам та ĕненме тивĕç, — терĕ Паладоил.

— Эсир пирĕн пата хăнана малашне вĕçсе килкелĕр-и вара?

— Çук, Айшагуль. Çĕр чăмăрĕ патне урăх çывăха та пымăпăр эпир. Пире вăл пиншер çул тыткăнра пурăннине, питĕ пысăк хăрушлăх тӳссе ирттернине асаилтерсе тăрĕ. Ку тапхăра пачах та аса илменни чылай лайăхрах пирĕншĕн. Сире вара, хаклă туссем, эпир нихăçан та манмăпăр. Юлашкинчен сире çапла асăрхаттарса хăварасшăн эпĕ. Халал вырăнне пултăр вăл. Сирĕн ушкăн, ачасем, чи лайăх пĕрлĕх, çĕр çинче чи пахи, мĕнпур халăхсенчен суйласа илни, темелле ăна. Çакна пирĕн чи çĕнĕ роботсем палăртрĕç, сирĕн юн, ют планета çинчисен чирне те çĕнтерме пултараканскер, кăтартса пачĕ. Çапла канаш парасшăн сире: нихăçан та пĕр-пĕринчен ан уйрăлăр, шăпа çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсене салатсан та çыхăнăва ан çухатăр. Этемсем пурте — пĕр тăвансем, сăмах май каласан, олгузсем, ытти мĕнпур чĕрчунсем пекех. Çакна эсир пире панă пулăшу ĕненмелле çирĕплетсе пачĕ. Акă эсир хăвăра тĕрлĕ наци çыннисем тесе шутлатăр, çĕр çинче уйрăм, таса наци пĕрре те çук. Хăйсен ăнланăвĕнче çынсем пĕтĕмпех хутшăнса пĕтнĕ, чĕлхе çын вăл е ку наци пулнине палăртаймасть ĕнтĕ. Çакна пирĕн мăнасаттесем çынсене çĕршер çул тĕпчесе çирĕплетнĕ. Каллех калатăп, сирĕн юн та çавнах кăтартать. Тĕрлĕ нацирен пулсан та пĕрешкел юнлă эсир. Сирĕн хушăра та, ачăрсен хушшинче те, нихăçан та хирĕçӳ ан тухтăр! Упранăр тавлашуллă ыйтусенчен, мĕншĕн тесен вĕсем сире олгузсем тӳссе ирттернинчен те хăрушăрах шăпа патне илсе пыма пултараççĕ.

Олгузсем ачасемпе пуринпе те алă тытса сывпуллашрĕç, куçса каяс умĕн ĕçсем нумай тесе кайма васкарĕç.

— Сывлăхлă пул, Токубай! Пĕрне-пĕри урăх кураймастпăр ахăр. Васкатпăр-çке. Çула тухас умĕн ачасене

апатлантарăр. Тухмалли çула пĕлетĕр эсир, — терĕ юлашкинчен старике ыталаса Алидогул. Куçĕсенче çутă тумламсем те палăрчĕç унăн.

Столовăйĕнче ачасен çумне Дима Макаров хутшăнчĕ.

— Ĕçе вĕçлерĕмĕр. «Типĕ шыв» чăнах та арбузон иккен. Халĕ ăна карап çине уçласа кĕртеççĕ, — пĕлтерчĕ вăл савăнăçлăн.

Космос карапĕпе сывпуллашасси нумая тăсăлмарĕ. Старик хыççăн ачасем лифт кабинине кĕчĕç. Вĕсем хыççăн алăк хупăнчĕ.

— Эсир килнĕ хыççăн çĕр айĕнчи туннельсенче роботсем ĕçлерĕç. Халĕ карап çинчен палăк патне самантрах çитме пулать. Акă чăн юмах пуçланать. Куçăрсене хупăр,— терĕ Токубай.

Тĕлĕнсе те ĕлкĕреймерĕç ачасем, йĕри-тавра темĕн кĕрлесе илчĕ, урай чĕтренме пуçларĕ, çутă сӳнчĕ. Çакна хупă куçсемпе те сисрĕç вĕсем. Унтан сасартăках пурте улшăнчĕ: хĕвел урисем Дима куçлăхĕн кĕленчисем, Рахимпа Гриня аллинчи пăшал кĕпçисем, таçтан тухса тăнă вĕр-çĕнĕ велоходăн никелленĕ пайĕсем çинче выляççĕ. Сăмсана чечексен ытарайми шăрши пырса çапрĕ.

Куçне уçсанах Андрей хăйсем пурте комиссар палăкĕ умĕнче тăнине курчĕ. Юнашарах палатка тăлăххăн курăнать. Унăн уçă алăкĕнчен пырса пăхрĕ ача, палатка çеремленнĕ, чечексемпе витĕннĕ çĕр çинче ларнине курчĕ. Вĕсем чавнă шăтăкăн йĕрĕ те юлман.

Рахим çав вăхăтра хăйĕн машинине тĕплĕн тĕпчерĕ:

— Тĕлĕнмелле, пĕчĕк шăйрăк та юлман. Пульăсем шинăсене шăтарса пĕтернине хамăн куçăмсемпех курнăччĕ-çке. Кустăрмасене кирлĕ чухлĕ сывлăш уçласа кĕртнĕ тата такам, — чăтса тăраймасăр вăл Токубай патне ыткăнчĕ.

— Мăнасатте! Эсир кунтах-мĕн. Çаксем пурте тĕлĕкре пулса иртнĕ пек те шутласа илтĕм.

— Кунтах эпĕ, мăнукăм. Инкексем вĕçленчĕç. Çĕнĕ пурнăç пуçланать. Чи пахи вара — олгузсем тинех хăйсене

кирлĕ планета çине вĕçсе кайма пултараççĕ. Мĕн тери савăнăç. Вĕсем патĕнче мĕн пулса иртни чăнах та тĕлĕкре курăннă тесе шутлăр. Аса илме кирлĕ мар ун çинчен. Эсир инкеке лекнисене пулăшрăр. Питĕ лайăх çакă. Малашне те çапла çеç тăвар. Эпĕ аякри çĕршывран киле таврăнатăп, — тесе калăпăр тĕл пулакансене. Çул çинче сире, походран килекенсене, тĕл пултăм, - тесе ăнлантармалла пурне те. Олгузсем çинчен асăнма та кирлĕ мар, юрĕ, атя киле пуçтарăнар, — старик палăк патне пырса чĕркуçленчĕ те тем пăшăлтатма пуçларĕ.

— Ĕнентерес тесен те ĕнентереймĕн кунта. Олгузсене асăнмалăх пĕр япала та илсе тухаймарăмăр вĕт карап çинчен, — терĕ Давид палаткăна сӳтме тытăнса. Хĕрачасем ăна пулăшма пуçларĕç.

— Эпĕ çакăн çинчен кĕнеке çыратăпах, — пăшăлтатрĕ Дима Андрее хăлхаран. — Çынсем олгузсем, вĕсен пурнăçĕ, чирĕ çинчен пĕлччĕр, вĕсен шăпи пире ан тивтĕр.

— Тĕрĕс,— пăшăлтатсах хуравларĕ Андрей.

— Çырмаллах вăл кĕнекене. Пурте пĕлччĕр.

15/XI-1969 — 1/XII-1988 ç.ç.

# *Тупмалли*

Пĕрремĕш сыпăк. ЧЕКАЛИН КОМИССАР........................................................... 5
Иккĕмĕш сыпăк. ÇĔНĔ ТУССЕМ........................................................................ 11
Виççĕмĕш сыпăк. КОМИССАР ÇЫРНИСЕМ......................................................... 18
Тăваттăмĕш сыпăк. КОМИССАР КĔНЕКИН ВĂРТТĂНЛĂХĔ......................... 23
Пиллĕкмĕш сыпăк. ХАТĔРЛЕНӲ......................................................................... 26
Улттăмĕш сыпăк. ПИРВАЙХИ ЧĂРМАВСЕМ..................................................... 30
Çиччĕмĕш сыпăк. ТУ ХĂВĂЛĔ............................................................................. 33
Саккăрмĕш сыпăк. АББАС ХУССЕЙНОВ ЙĔРĔ.................................................. 38
Тăххăрмĕш сыпăк. АТАШСА КАЙНĂСКЕРСЕМ................................................ 42
Вуннăмĕш сыпăк. ОЛГУЗСЕМ.............................................................................. 49
Вунпĕрмĕш сыпăк. ХĂРУШĂ ЧИР....................................................................... 53
Вуниккĕмĕш сыпăк. ВĂРТТĂНЛĂХ СИРĔЛЕТ.................................................... 59
Вунвиççĕмĕш сыпăк. ЭМЕЛ.................................................................................. 64
Вунтăваттăмĕш сыпăк. АРБУЗОН.........................................................................70
Вунпиллĕкмĕш сыпăк. АСĂРХАТТАРУ.................................................................73

ДЛЯ ДЕТЕЙ МЛАДШЕГО И СРЕДНЕГО ШКОЛЬНОГО ВОЗРАСТА

Евгений Андреевич Турхан

# СТРАШНАЯ БОЛЕЗНЬ

*Повесть*

Редактор В. Н. Сорокин
Художники В. Л. Бибишев,Ю.С. Капитонов
Набор М. Н. Румянцева
Компьютерная верстка С. Н. Колесникова
Корректор Е. А. Савельева

Книга набрана и сверстана
в компьютерном центре
республиканской чувашской
газеты «Сувар».

Отпечатано........................................... с готового оригинал-макета.
Подписано к печати...... Формат........
Заказ...... Тираж........ Бумага.........